№

ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1953 ҫул
Ноябрь
14
ШАМАТКУН
№ 222 (9131)
Хакӗ 20 пус.
36-мӗш ҫул тухать.

Паянхи номерте:

Тӑван ҫӗршывра (1 стр.).
Хамӑр республикӑра (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНАҪӖ: Г. Терновский.—Партилле-политикӑлла ӗҫе тӑтӑшах вӑйлатса пымалла; Н. Цветков.—Решение ӗҫпе ҫирӗплетмен; А. Московский.—Комсомольски районӗнче парти вӗренӗвне начар йӗркеленӗ (2 стр.).
Е. Андреева. — Комсомолецсем ялхуҫалӑхне малалла вӑйлатассишӗн пыракан кӗрешӳре (2 стр.).
И. Артамонов.—Шупашкарти пир-авӑр комбинатне мӗншӗн вӑраххӑн тӑваҫҫӗ (3 стр.).
В. Г. Егоров, М. Г. Григорьева.—Чӑваш чӗлхинчи араб, перс тата монгол сӑмахӗсем (3 стр.).
Вырӑнти Советсенче (3 стр.).
М. Титов.—Колхоз выставкинче (3 стр.).
Генеральнӑй Ассамблейӑн VIII-мӗш сессийӗ (4 стр.).
Бонра тата Парижра йышӑннӑ ҫар договорӗсене ҫирӗплетессине хирӗҫ (4 стр.).
Мосаддыка суд туни (4 стр.).
Тегеранри лару-тӑру (4 стр.).
Америка шпионӗсем Демократиллӗ Германи Республикинче сӑтӑрла ӗҫсем тӑваҫҫӗ (4 стр.).

Культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсем хӗлле

Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗсенче ялти культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсем умне пысӑк та хисеплӗ задачӑсем лартнӑ. КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ ҫапла тума хушнӑ: «Ялти культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсен ӗҫӗн шайне ҫӗклемелле, библиотекӑсемпе клубсен ӗҫне лайӑхлатмалла, кинофильмсем тӑтӑшах кӑтартмалла, ялсене радио кӗртес ӗҫе вӑйлатмалла, радиовещани пахалӑхне ӳстермелле».

Ялти клубсемпе культура ҫурчӗсен, вулав ҫурчӗсемпе библиотекӑсен колхозниксемпе колхозницӑсене тата ялхуҫалӑх механизаторӗсене вӗсен культурӑлла шайне ӳстерес, агротехникӑпа зоотехника наукисене вӗренсе алла илес ӗҫре куллен пулӑшса пымалла. Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен ӗҫ опытне сарасси, художествӑлла пултарулӑха вӑйлатса пырасси тата ялхуҫалӑх ӗҫченӗсен кану вӑхӑтне савӑнӑҫлӑ та усӑллӑ ирттересси,— ҫаксем пурте ялти культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсем туса пымалли хисеплӗ те пархатарлӑ ӗҫсем пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫак пысӑк та ответлӑ задачӑна пурнӑҫласси, ӑнлантару ӗҫне витӗмлӗ туса пырасси ялти культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсене хӗлле ӗҫлеме лайӑх хатӗрлесе ҫитерниччен нумай килет.

Ялти культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсен ӗҫне хӗллехи вӑхӑтра та ӑнӑҫлӑ туса пырас тесен, вӗсене пур енчен те лайӑх хатӗрлесе ҫитермелле, мӗншӗн тесен занятисем йӗркеллӗ ирттерме тата культурӑллӑ канма кирлӗ условисем туса хумасӑр политикӑлла тата культурӑлла пӗр мероприяти те витӗмлӗ пулма пултараймасть.

Апла пулин те, ҫак ӗҫ ялсенче начар пырать-ха. Нумай пулмасть Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсене хӗле хатӗрлес ыйтӑва сӳтсе явнӑ, ҫак ӗҫ ҫителӗксӗр пынине палӑртнӑ. Чылай районсенчи культура ҫурчӗсем, ялти вулав ҫурчӗсемпе библиотекӑсем хӗллехи тапхӑрта ӗҫлеме хатӗрленсе ҫитмен-ха. Вӗсенче хӗллехи вӑхӑтра политикӑлла-массӑлла ӗҫе туса пыма тата культурӑлла канма кирлӗ условисем ҫук. Ҫав вӑхӑтрах, Элӗк, Йӗпреҫ, Калинино, Сӗнтӗрвӑрри, Ҫӗмӗрле районӗсенче культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсене юсама уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗпе ҫуррипе те усӑ курман.

Культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсенче сӗтел-пукан, музыка инструменчӗсем, спорт хатӗрӗсем тата ытти тӗрлӗ оборудовани ҫителӗклӗ пулмалла. Ку тӗлӗшпе Чурачӑк районӗнчи культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсем уйрӑмах чухӑн. Ҫав вӑхӑтрах ку районта ялти клубсемпе вулав ҫурчӗсем валли тӗрлӗрен япаласемпе оборудовани туянма уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗн 40 проценчӗпе усӑ курман. Клубсемпе вулав ҫурчӗсем валли оборудовани туянасси Октябрьскипе Ишлей районӗсенче те ҫавӑн пекех япӑх пырать.

Халӗ вӑхӑта сая ямасӑр кирлӗ ҫӗрте кӑмакасем тумалла, чӳречесем лартмалла, вутӑ ҫителӗклӗ кӳрсе хумалла. Ку тӗлӗшпе Муркашпа Шупашкар районӗсенче уйрӑмах начар ӗҫлеҫҫӗ. Шупашкар районӗнчи 3 клубпа 12 вулав ҫуртӗнче пӗр пуленке вутӑ та ҫук.

Кашни культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗнче радио пулмалла. Апла пулин те, Октябрьски районӗнчи вулав ҫуртне, Чкаловски районӗнчи 2 вулав ҫуртне халӗ те радио кӗртмен. Ҫапла вара клубсемпе вулав ҫурчӗсене пыракансем общественӑлла-политикӑлла тата ялхуҫалӑх темисем тӑрӑх радиопередачӑсем итлеме, Совет Союзӗпе ют ҫӗршывсенче пулса иртекен событисене вӑхӑтра пӗлсе тӑма, литературӑпа искусствӑн чи лайӑх произведенийӗсемпе паллашма пултараймаҫҫӗ.

Районсенчи культура пайӗсен культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсене хӗллехи тапхӑрта ӗҫлеме условисем туса парас тӗлӗшпе халех васкавлӑ мерӑсем йышӑнмалла: сивӗ кунсем пуҫланиччен культура ҫурчӗсемпе клубсене, библиотекӑсемпе вулав ҫурчӗсене юсаса пӗтермелле, вӗсене ӑшӑ тытакан тумалла, вутӑ ҫителӗклӗ хатӗрлесе турттарса хумалла, бюджетпа уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗпе пӗтӗмӗшпех усӑ курса, йӗркеллӗ ӗҫлеме мӗн кирлине пурне те туянмалла. Кашни культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗнче ӗҫсыннисене лайӑх вӗренме тата культурӑллӑ канма условисем пулчӑр.

Клубсемпе библиотекӑсен хӗллехи ӗҫне содержани енчен пуян тата нумай енлӗ тӑвасси ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхмалла. Вӗсен ӗҫӗнче КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗсене, «Ҫӗршывра выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен тата колхозниксен, рабочисемпе служащисен хуҫалӑхӗсем обязательнӑй йӗркепе выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем памалли нормӑсене чакарасси ҫинчен», «1953—1955 ҫулсенче колхозсемпе совхозсенче ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫсем туса илессине ӳстермелли мерӑсем тата вӗсене хатӗрлесси ҫинчен», «Машина-трактор станцийӗсен ӗҫне малалла лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен», «Кӳллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларассине ӳстересси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси ҫинчен», «Апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине ӳстересси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси ҫинчен» йышӑннӑ постановленисене ӗҫсыннисен анлӑ массисене ӑнлантарса парасси тӗп вырӑнта пулмалла. Ҫак постановленисене тӗплӗнрех ӑнлантарса парас тесе, ялхуҫалӑхне малалла аталантарассишӗн, общественӑлла выльӑх-чӗрлӗх йышне тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн пыракан кӗрешӗве кӑтартса паракан выставкӑсем йӗркелемелле, унтах малта пыракан колхозсемпе бригадӑсен ҫитӗнӗвӗсене ҫутатса памалла. Партипе правительство халӑх ырлӑхӗшӗн тӑрӑшни ҫинчен тата Совет Союзӗн коммунизм тӑвас ӗҫри ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен докладсемпе калаҫусем тӑтӑшах ирттермелле. Хӗллехи тапхӑр валли ӗҫ планӗсем тунӑ чух клубсемпе библиотекӑсен Совечӗсен агротехникӑпа зоотехника кружокӗсем йӗркелесси ҫинчен асра тытмалла. Культура ҫурчӗсемпе клубсем тата вулав ҫурчӗсем яла ӗҫлеме таврӑнакан механизаторсемпе специалистсене ӑшшӑн та кӑмӑллӑн кӗтсе илмелле, ҫав специалистсемпе колхозниксен тӗлпулӑвӗсене ирттермелле. Ялхуҫалӑх специалисчӗсемпе механизаторсене культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсен ӗҫне, лекцисемпе калаҫусем ирттерме, художествӑлла пултарулӑх ӗҫне активлӑн хутшӑнтармалла. Художествӑлла пултарулӑх коллективӗсене ертсе пыма уйӑрнӑ руководительсен халӑх хушшинче лартса пама художествӑпа идея енчен паха пьесӑсем суйласа илмелле, халӑх хушшине илемлӗ юрӑсем сармалла, ҫӗнӗ юрӑсем вӗренессине йӗркелемелле.

Ӗҫсыннисене коммунизмла воспитани парас ӗҫре кинопа радио пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Ялхуҫалӑх наукин ҫитӗнӗвӗсене, колхоз производствинче малта пыракансен опытне сарас ӗҫре кинокартинӑсемпе туллин усӑ курмалла, ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх ирттерекен лекцисем хыҫҫӑн кинокартинӑсем кӑтартмалла. Кашни культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗнче ушкӑнпа пухӑнса радиопередачӑсем итлессине тӑтӑшах ирттермелле.

Культура ҫурчӗсемпе клубсен, библиотекӑсемпе вулав ҫурчӗсен ӗҫне лайӑх та витӗмлӗ туса пырса, ялти ӗҫченсен культурӑлла шайне ӳстерме пулӑшар!

Ялхуҫалӑхӗ валли машинӑсем

МИНСК, ноябрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Белоруссири Вырӑнти тата топливо промышленность министерствин Лидӑри завочӗн коллективӗ ӗнер Прибалтикӑри машина-трактор станцийӗсем валли тӗмӗсем касмалли машинӑсем ярса панӑ. Вӗсене декабрь уйӑхӗ шучӗпе туса кӑларнӑ. Ҫак машинӑсене чылай ҫӗнетнӗ, вӗсен рамине ӑнсатлатнӑ, касакан механизмсене лайӑхлатнӑ, материалсем расходлассине чакарнӑ. Ҫакна пула машинӑсем пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна хӑвӑртрах куҫма, тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пултараҫҫӗ. Гусеницӑллӑ тракторсенчен кӑкарсан машинӑсемпе хирсене вӗтлӗхрен тата тумхахсенчен тасатнӑ ҫӗрте усӑ курма пулать.

Гомель облаҫӗнчи Речицкри райпромкомбинат сортировкӑсем туса кӑларас ӗҫе виҫӗ хут ӳстернӗ. Предприяти планран ирттерсе пӗтӗн ҫапмалли молотилкӑсем, урапасем, лаша таврашӗ туса кӑларать.

Кӑҫал, иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑрпа танлаштарсан, республикӑри вырӑнти промышленность ялхуҫалӑхӗ валли машинӑсем туса кӑларассине пӗрре ҫурӑ хут ытла ӳстернӗ.

Пурҫӑн пир-авӑр туса кӑларакан комбинат

БЕНДЕРЫ (Молдаван ССР-ӗ), ноябрӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта пурҫӑн пир-авӑр комбиначӗн строительстви анлӑн сарӑлнӑ. Вӑл ҫӗршыври пурҫӑн пир-аврӗ туса кӑларакан чи пысӑк комбинатсенчен пӗри пулать. Малтанхи корпуссене — мастерскойсене, гаража тата ыттисене те ӗҫе янӑ.

Комбинат 1955 ҫул вӗҫӗнченӗ тӗле хатӗр пулать. Вӑл ҫулталӑкне натуральнӑй тата искусственнӑй пурҫӑнтан 8 миллион метра яхӑн пир-авӑр тӗртсе кӑлармалла.

Комбинатри рабочисемпе служащисем валли ҫуртсем тӑваҫҫӗ. Малтанхи хут нумай хваттерлӗ ултӑ ҫурт туса лартнӑ. Ҫитес ҫулта кунта икӗ-виҫӗ хутлӑ ҫуртсенчен темиҫе квартал ӳсе ларать.

ТӐВАН ҪӖРШЫВРА

Трактористсене ӗҫшӗн ҫӗнӗлле тӳлеҫҫӗ

МАРЬИНКА (Сталино облаҫӗ), ноябрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Марьинка МТС-чи механизаторсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн постановленийӗ тӑрӑх ҫӗнӗ йӗркепе малтанхи хут тырӑ тата укҫа илнӗ. Мӗнпур трактористсем ӗлӗкхинчен чылай ытларах ӗҫлесе илеҫҫӗ.

11-мӗш бригадӑри трактористсем Ильич ячӗпе тӑракан колхозра ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем октябрь уйӑхӗнче уй-хирти мӗнпур ӗҫсене вӗҫлерӗҫ, кашни тракторпа ӗҫлемелли плана чылай ирттерсе тултарнӑ. Меняйло бригадир пӗр уйӑх хушшинче 277 ӗҫкунӗ тунӑ. Ӑна МТС 1.385 тенкӗ укҫа, сакӑр центнер ытла тӗштырӑ панӑ. «ДТ-54» тракторпа ӗҫлекен Шумейко тата Петрошук 200-шер ӗҫкунӗ тунӑ. Вӗсене 1.000-шер тенкӗ укҫа тата 6-шар центнер тӗштырӑ панӑ.

Трактористсем машинӑсем юсанӑ ҫӗрте те лайӑх ӗҫлесе илеҫҫӗ. Ӗлӗкрех вӗсем кӗрхи ҫӗртме тунӑ хыҫҫӑн МТС-ра ӗҫлемен. Халӗ Чумаченко, Витряк тата ытти трактористсем те тракторсем юсанӑ ҫӗрте слесарьсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем кунсерен 20 тенкӗрен кая мар ӗҫлесе илеҫҫӗ.

Кӗрхи ҫӗртме тунӑ ҫӗрте прицепщиксем пулса ӗҫленӗ колхозниксем те МТС-ран малтанхи хут тырӑ тата укҫа илнӗ. Ильич ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗнчи Галущенко, Удыльский тата ыттисем пӗр уйӑх ӗҫленӗшӗн МТС-ран 250—300-шер тенкӗ укҫа илнӗ. Унсӑр пуҫне колхозра октябрь уйӑхӗнче тунӑ ӗҫкунӗсемшӗн вӗсене 2—3-шер центнер тырӑ, 300—400-шер тенкӗ укҫа параҫҫӗ.

МТС-сене ӗҫлеме каяҫҫӗ

КУЙБЫШЕВ, ноябрӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер хулари ӗҫсыннисем МТС-сене ӗҫлеме кайма кӑмӑл тунӑ специалистсен пысӑк ушкӑнне ӑсатса янӑ. Куйбышеври предприятисенче инженер-механик тата техниксем пулса ӗҫленӗ 150 ҫын ялсене тухса кайнӑ. Вӗсене МТС директорӗсем, главнӑй инженерсем тата мастерской заведующийӗсем пулма ҫирӗплетнӗ. Специалистсенчен нумайӑшӗ Атӑл леш енчи инҫетри районсене—Больше-Черниговски, Пестравски, Больше-Глушицки тата ытти районсене кайнӑ.

Ҫитес кунсенче хуларан специалистсен ҫӗнӗ ушкӑнӗ ялсене ӗҫлеме каять.



Белорус ССР-ӗ. Минскри трактор завочӗ «Беларусь» ятлӑ урапаллӑ пропашной трактор туса кӑларма тытӑннӑ. «Беларусь» трактортан тӗрлӗрен ялхуҫалӑх машинисене кӑкарса ӗҫлеҫҫӗ. Трактор хӑвачӗ вӑтам шутланать. Ку трактора икӗ йышши туса кӑлараҫҫӗ. «МТЗ-1» текеннин малти урапиcене ансӑр вырнаҫтарса лартнӑ, «МТЗ-2» текеннин малти урапиcене сарлакарах вырнаҫтарса лартнӑ.

Икӗ йышши тракторпа та ялхуҫалӑхӗнчи нумай ӗҫсене тума—сухалама, культиваци тума, ҫӳрелеме, акма тата ытти ӗҫсене те тума пулать. Кунсӑр пуҫне, «Беларусь» тракторпа ялхуҫалӑх культурисен рет хушшисене кӑпкалатма усӑ кураҫҫӗ. «МТЗ-1» йышши тракторпа тунисем ҫӳлӗ ӳсекен культурӑсен (хлопчатник, хӗвелҫаврӑнӑшӗ, кукуруза) рет хушшисене, «МТЗ-2» тракторпа лутра ӳсекен культурӑсен (сахӑр кӑшманӗ, ҫӗрулми, пахча ҫимӗҫсем) рет хушшисене кӑпкалатаҫҫӗ.

Трактора пӗр вырӑна лартса ӗҫлеттерсе те усӑ курма пулать. Сӑмахран, молотилкӑсене, силосорезкӑсене тата ыттисене те ӗҫлеттерме май пур. «МТЗ-2» тракторпа тягач вырӑнне те усӑ курма юрать.

Трактор ҫине 37 лаша вӑйлӗ дизеллӗ двигатель вырнаҫтарса лартнӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: «МТЗ-2» текен «Беларусь» трактор.

В. ЛУПЕЙКО фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Ялти суту-илӳ организацийӗсем валли квалификациллӗ кадрсем

Центросоюз правленийӗ потребкоопераци валли квалификациллӗ суту-илӳ работникӗсем хатӗрлемелли пысӑк план ҫирӗплетнӗ.

1954—1956 ҫулсенче техникумсенче 20 пин специалист ытла—товароведсем, бухгалтерсем, плановиксем вӗрентсе хатӗрлеме палӑртнӑ. Ҫав ҫулсенчех суту-илӳпе кооператив шкулӗсем магазинсен заведующийӗсем, продавецсем, поварсем, ҫӑкӑр пӗҫерекенсем, счетоводсем тата ытти работниксем пулса ӗҫлеме 46,5 пин ҫын вӗрентсе кӑлараҫҫӗ. 1954 ҫулта ҫавӑн пек работниксене 15 пин ҫын ытла вӗрентсе хатӗрлемелле.

Ҫитес ҫулхи сентябрьте темиҫе облаҫри ҫынсене вӗрентме суту-илӳпе кооперацин икӗ ҫуллӑх шкулӗсене ҫӗнӗрен уҫаҫҫӗ. Кун пек шкулсем 10 уҫмалла тунӑ. Ҫак шкулсенче потребкоопераци енӗпе практикӑра нумай вӑхӑт хушши лайӑх ӗҫленӗ работниксем вӗренмелле, унта вӗсем специальность енӗпе вӑтам пӗлӳ илеҫҫӗ.

Магазинсен, чайнӑйсен, столовӑйсен заведующийӗсем вӗрентсе хатӗрлеме кӗске сроклӑх курссем нумай уҫаҫҫӗ.

Суту-илӳпе хатӗрлев предприятийӗсенче, производство предприятийӗсенче, бригадӑсем туса тата кашнине уйрӑммӑн вӗрентсе кадрсем хатӗрлесси чылай анлӑ сарӑлать.

Центросоюз правленийӗ кооперацин аслӑ шкулӗсенче, университетсен экономика факультечӗсенче аслӑ пӗлӳ илнӗ специалистсем вӗрентсе хатӗрлемелли план ҫирӗплетнӗ. (ТАСС).

Трансформаторсем тӑвакансен ӗҫри ҫӗнтерӗвӗ

Мускаври В. В. Куйбышев ячӗпе тӑракан трансформаторсем тӑвакан завод 1953 ҫулхи задание пурнӑҫланӑ. Продукцин хӑйне ларакан хакне чакарнине пула виҫҫӗмӗш кварталта икӗ миллион тенкӗ ытла перекетленӗ.

Предприятири виҫӗ цех тата 100 бригада ытла чи лайӑх продукци туса кӑларакан коллектив ятне илнӗ.

Завод ялхуҫалӑхне электрификацилес ӗҫ валли трансформаторсем нумай туса кӑларать. Юлашки уйӑх хушшинче колхозсенчи электростанцисем, выльӑх-чӗрлӗх фермисем, теплицӑсемпе парник хуҫалӑхӗсем валли 500 трансформатор туса хатӗрленӗ. (ТАСС).

Ҫӗнӗ универмаг

СССР Суту-илӳ министерствин Главунивермагӗ Мускавра ача-пӑча валли таварсем сутакан ҫӗнӗ универмаг йӗркелеме пуҫланӑ. Ӑна ӗлӗкхи Лубянски пассажӑн (икӗ енӗпе те магазинсем лартса тухнӑ, ҫине витнӗ галлерея) ҫуртӗнче йӗркелеҫҫӗ. Ку вӑл ҫӗршывра ача-пӑча валли япаласем сутакан чи пысӑк магазин пулать.

СССР Суту-илӳ министерстви пассажа ҫӗнетсе улӑштарас, юсас тата ҫӗнӗ оборудовани вырнаҫтарас ӗҫ валли укҫа-тенкӗ нумай уйӑрнӑ. Ҫак ӗҫсене пурнӑҫлама чылай строительство организацийӗсене хутшӑнтараҫҫӗ.

Магазинра хутса ӑшӑтмалли, вентиляци тумалли установкӑсем, холодильниксем, санитарипе техникӑра кирлӗ хатӗрсем, грузсене хӑпартмалли тата куҫармалли хатӗрсемпе механизмсем, тумтир тӑхӑнса пӑхмалли пӳлӗмсем пулаҫҫӗ.

Суту-илӳ залӗсене тата ача-пӑча буфетне архитектура тӗлӗшӗнчен илемлетес тата капӑрлатас ӗҫ ҫине те тимлӗ пӑхаҫҫӗ. (ТАСС).

СССР ДОСААФ оргкомитетӗнче

СССР ДОСААФ оргкомитечӗ 1953 ҫулхи декабрӗн 26-мӗшӗнче Мускавра Ҫар, Авиацие тата Флот ӗҫне пулӑшакан ирӗклӗ обществӑн Пӗтӗм Союзри I-мӗш конференцине пухасси ҫинчен постановлени йышӑннӑ. Унта ирӗклӗ обществӑн ӗҫӗ мӗнле пыни, обществӑн черетри задачисем ҫинчен, ДОСААФ-ӑн Уставне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен тӑракан ыйтусене пӑхса тухмалла. Конференцире ҫавӑн пекех ДОСААФ-ӑн Центральнӑй Комитечӗн тата Центральнӑй ревизи комиссийӗн суйлавӗсем пулаҫҫӗ. (ТАСС).

Хамӑр республикӑра

Министерствӑсемпе ведомствӑсенче

БРИГАДИР ОПЫЧӖ ҪИНЧЕН

Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхоз ҫулленех тухӑҫлӑ тырпул туса илет. Кӑҫал та ку колхозра 405 гектар ҫинче вӑтам шутпа 20,5-шер центнер ыраш туса илнӗ. Уйрӑмах М. Филиппов ютлаш ертсе пыракан уй-хир бригади пысӑк тухӑҫлӑ тырпул ҫитӗнтернӗ. Ку бригада 38 гектар ҫинче вӑтам шутпа кашни гектартан 27 центнер ыраш туса илнӗ.

Чӑваш АССР Ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев министерствин пропаганда управленийӗ М. Филиппов бригадирӑн ӗҫ опычӗ ҫинчен листовкӑсем пичетлесе кӑларма хатӗрленет. Ҫак листовкӑсене виҫӗ пин экземпляр пичетлеҫҫӗ, вӗсене республикӑри колхозсене ярса параҫҫӗ.

КИНОМЕХАНИКСЕН КУРСӖ

Республикӑри хуласемпе ялсенче кинотеатрсемпе кино кӑтартмалли стационарсен шучӗ нумайлансах пырать. Ҫавна май халӑха кино кӑтартас ӗҫе туса пыма квалификациллӗ специалистсем чылай кирлӗ. Халӗ Чӑваш АССР Культура министерстви ҫумӗнче киномеханиксен виҫӗ уйӑхлӑх курсӗ ӗҫлет.

АПАТ-ҪИМӖҪ ПРОМЫШЛЕННОҪӖ ВАЛЛИ

Чӑваш АССР Сӑмах тата апат-ҫимӗҫ промышленность предприятийӗсем ҫулленех хӑватлӑ техникӑпа пуянланса пыраҫҫӗ. Кӑҫал Вӑрнарти тата Ҫӗмӗрлери апат-ҫимӗҫ комбиначӗсенче ҫӗрулми тасатмалли тата турамалли механизмсем вырнаҫтарса лартнӑ. Ку механизмсемпе усӑ курни ӗҫ тухӑҫлӑхне чылай ӳстерме тата ӗҫ пахалӑхне лайӑхлатма май парать.

Ҫакӑн пек механизмсем ытти апат-ҫимӗҫ предприятийӗсене те кӳрсе килеҫҫӗ.

Куҫса ҫӳрекен мастерской

ҪӖМӖРЛЕ. Кӑҫал районти ялхуҫалӑх выставкинче, МТС илнӗ ҫӗнӗ машинӑсемпе пӗрлех, курма пыракансем «Комбайндеталь» завод илсе тухнӑ машинӑна юратса пӑхреҫ. Груз турттармалли «ГАЗ-51» машина шасси ҫине вырнаҫтарнӑ кузова та, машинине те пӗр тӗслӗ сӑрпа сӑрланӑ. Ҫак машина уйрӑмах МТС механизаторӗсене интереслентерет.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: «Комбайндеталь» заводра тунӑ куҫса ҫӳрекен мастерской.

Ку вӑл тракторпа ытти ялхуҫалӑх машинисене хирти условисенче юсамалли куҫса ҫӳрекен мастерской.

Ҫӗнӗ конструкци тӑрӑх туса кӑларакан мастерской киввинчен пачах уйрӑлса тӑрать. Вӑл ҫирӗпрех, илемлӗрех тата тӳсӗмлӗрех. Кузовне халӗ тачкарах йывӑҫран тӑваҫҫӗ, ҫиелтен шуҫтимӗрпе витсе ҫирӗплетеҫҫӗ. Йывӑҫпа тимӗр хушшине картон хураҫҫӗ.

Мастерской ӑшне шурӑ сӑрпа сӑрланӑ. Кунта тракторсемпе ытти ялхуҫалӑх машинисене хирти условисенче юсамалли мӗнпур инструментсемпе оборудовани пур. Кирлӗ чухне мастерскоя ӑшӑтма та пулать. Кунта машинӑран пыракан ӑшӑпа ӑшӑтакан приборсем пур. Вентиляци ӗҫлет, бригадӑна канма диван пур.

Ҫӗнӗ мастерской лайӑхрах тата ҫирӗпрех пулин те, ӑна тума киввинчен 16 процент йӳнӗрех ларать.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ йышӑннӑ постановленире ҫакӑн пек мастерскойсем 1954—56 ҫулсенче 4.200 туса кӑларма палӑртнӑ. ССР Союзӗн Ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев министерстви мастерскойӑн ҫӗнӗ конструкцине ырланӑ, ӑна Ҫӗмӗрлери йывӑҫ япаласем тӑвакан заводра тата ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев министерствине кӗрекен заводсенче серипе кӑларма йышӑннӑ.

Хальхи вӑхӑтра завод коллективӗ мастерской конструкцине татах лайӑхлатас тӗлӗшпе ӗҫлет. Тӗслӗхрен, инструментсемпе оборудование ҫирӗпрех вырнаҫтармалла, начар ҫулпа пынӑ чухне кузов ытлашши ан пустӑр тата ан силлентӗр тесе, вӑл шасси ҫине пусассине ҫӑмӑллатмалла. Унсӑр пуҫне мастерскойри оборудование электричество вӑйӗпе ӗҫлеттермелле тумалла.

Е. АФАНАСЬЕВ.
(Хамӑр корр.).

Хулари предприятисем колхозсене пулӑшаҫҫӗ

КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ «ССР Союзӗн Ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен» йышӑннӑ постановление Улатӑр хулинчи промышленноҫпа транспорт предприятийӗсенче ӗҫлекенсем пысӑк ҫӗкленӳпе кӗтсе илчӗҫ. Ҫак постановлени ҫинчен ӑнлантарас ӗҫе парторганизацисем анлӑн туса пыраҫҫӗ.

Хулари предприятисенче ялхуҫалӑх специалисчӗсем пурӗ 92 ҫын ӗҫлени палӑрчӗ. Вӗсем хушшинче 7 агроном, 12 зоотехник, 50 тракторист, 3 комбайнер, 7 ветеринар, трактор бригадин бригадирӗсем 4 ҫын. Вӗсенчен 30 ҫын ытла колхозсене ӗҫлеме кайма кӑмӑл турӗҫ. Пӑравуссем юсакан заводри главнӑй инженер-механик А. Попов ютлаш МТС-а ӗҫлеме яма ыйтса заявлени пачӗ.

Хулари предприятисенчи рабочисем колхозсене ҫӗрулми пухса кӗртме пулӑшрӗҫ. Йывӑҫран япаласем тӑвакан комбинатри рабочисем Калинин ячӗпе тӑракан тата «Стахановец» колхозсенче пурӗ 10 гектар ҫӗрулми кӑларнӑ. Вӑрман тата ялхуҫалӑх техникумӗнче вӗренекенсем Молотов ячӗпе тӑракан колхоза 20 гектар ҫӗрулми кӑларса панӑ.

Пӑравуссем юсакан завод коллективӗ Калинин ячӗпе тӑракан колхоза электрификацилеме, ялхуҫалӑх машинисене юсама ятарласа бригада уйӑрнӑ. Заводри партбюропа профсоюз комитечӗ колхозниксем валли лекцисем ирттерме палӑртнӑ. Художествӑлла пултарулӑх кружокӗ колхозниксем валли концертсем ирттерет.

Хулари предприятисен коллективӗсем ялхуҫалӑх заказӗсене срокчен тата пысӑк пахалӑхпа пурнӑҫлассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

И. ЕРЕМИН.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партилле-политикăлла ĕçе тăтăшах вăйлатса пымалла

КПСС Комсомольски районĕнчи парторганизацин конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире парти райкомĕн секретарĕ Харитонов юлташ отчетлă доклад турĕ.

Конференци районти парторганизаци ĕçĕнчи хăшпĕр ӳсĕмсене палăртать. Пуçламăш парторганизацисем партилле-организацилле ĕçĕн шайне ӳстерсе пынă май, районти колхозсем хуçалăх ĕçĕсене лайăхрах та хăвăртрах туса ирттернĕ. Район государствăна тырă памалли кăçалхи плана иртнĕ çулхисенчен иртерех тултарнă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановление йĕлантарса пани районти ялхуçалăх ĕççенĕсен социализмла ăмăртăвне ытларах вăйлатма май панă. Çавна май ĕççыннисем ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлесе пыраççĕ, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тăрăшса хатĕрленеççĕ.

Районти парторганизаци конференцийĕ ĕçри пысăк çитменлĕхсене те палăртрĕ. КПСС райкомĕ колхозсенчи тата МТС-ри пуçламăш парторганизацисене çителĕксĕр пулăшать, ялхуçалăх артелĕсене ертсе пынă чухне вĕсем çине таянса ĕçлемест. Чылай колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем колхозсен обществăлла хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе начар ĕçлени çавăнтан килет те ĕнтĕ. Районти колхозсенчен нумайăшĕ пĕчĕк тухăçлă тырпул туса илеççĕ.

Район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă. Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Колхозсенчи ĕне фермисенче ĕне выльăхсем 30 процент кăна шутланаççĕ. Ĕç çавăн пек начар тăрать пулин те, ĕнесен шучĕ чакса пырать. Сăмахран, «Красная звезда» колхозра кăна юлашки вăхăтра 6 пуç ĕне чакнă.

Районти парторганизаци задачи—мĕнпур ĕççыннисене, колхозниксемпе МТС работникĕсене, ялхуçалăх механизаторĕсене КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановленирен тухса тăракан задачăсене вăхăтра та тивĕçлипе пурнăçлама мобилизацилесси пулса тăрать. Анчах та КПСС райкомĕ хăйĕн ĕçĕсене çĕнетсе улăштарни сисĕнмест-ха.

«Знамя коммунизма» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Севастьянов, «Дружба» колхозри парторганизаци секретарĕ Захаров, «Красная звезда» колхоз председателĕ Яковлев юлташсем КПСС райкомне ялхуçалăх специалисчĕсене начар ертсе пынăшăн, сентябрьти Пленум хушнă пек ĕçлеменшĕн критиклерĕç. Ялхуçалăх специалисчĕсем колхозсене практикăлла пулăшу парас вырăнне пани куна та тĕрлĕрен сведенисем пухса вăхăта ытларах ирттереççĕ, колхоз производствинчи çитменлĕхсене пĕтерме сахал пулăшаççĕ.

Делегатсем ялхуçалăх специалисчĕсемпе колхоз руководителĕсен пĕрлехи семинарĕсемпе канашлăвĕсене ирттерме кирли çинчен каларĕç. Çавăн пек туни умра тăракан задачăсене пĕрле сӳтсе явма, малашнехи ĕçе тĕплĕреххĕн палăртма пулăшмалла. Кунпа пĕрлех конференцире тухса калакан юлташсем колхозсенчи агрозоотехника курсĕсене лайăхрах ертсе пыма кирлине палăртрĕç.

Машина-трактор станцийĕ выльăх-чĕрлĕх фермисене механизацилес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Делегатсем ку тĕлĕшпе уйрăмах МТС директорĕ Малышев юлташпа унти ертсе пыракан ытти работниксем çаврăнăçусăр пулнине палăртрĕç.

Парти райкомĕ хăйĕн членĕсене ĕçе сахал хутшăнтарать. Райком секретарĕсем пĕтĕм ĕçе аппарат вăйĕпе кăна туса пыма пăхаççĕ. Прениre тухса каланă делегатсем—Кузнецовпа Ваньков юлташсем парти райкомĕ çавăн пек туни пысăк çитменлĕх пулать тесе палăртрĕç.

Александров юлташ парти райкомĕ колхозсене ертсе пырассине уполномоченнăйсем урлă ытларах тунине пысăк çитменлĕх тесе шутлать. Райком ялхуçалăх ĕçĕсене пĕлмен работниксене час-часах колхозсене уполномоченнăйсем туса ярать. Çавăн пек туни колхоз руководителĕсен ĕçри хастарлăхне чакарасси патне илсе пырать. Александров юлташ кунпа пĕрлех районти ответлă работниксене ялхуçалăх ыйтăвĕсене вĕрентес ĕçе йĕркелеме кирли çинчен сĕнӳ парать.

Даров юлташ КПСС райкомĕпе райсовет исполкомне йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн критиклерĕ.

Конференци делегачĕсем республикăри хăшпĕр организацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене те палăртрĕç. Яковлевпа Боровков юлташсем республикăри «Водстрой» кантурĕн руководителĕсене колхозсемпе тунă договора пурнăçламаншăн критиклерĕç, çавăн пекех тата Чăвашпромсовет колхозсене пулăшманни çинчен каларĕç.

Отчетлă доклад тăрăх пурĕ 20 делегат тухса каларĕ.

Конференци КПСС райкомĕн çĕнĕ составне суйларĕ.

Парти райкомĕн организацилле пленумĕ райком секретарĕсем пулма Родионов, Харитонов тата Павлова юлташсене суйларĕ.

Г. ТЕРНОВСКИЙ.

Решение ĕçпе çирĕплетмен

Коммунистсемпе кадрсен политикăлла вĕренĕвне йĕркелес тĕлĕшпе Сĕнтĕр районĕнче те кружоксемпе политшкулсем организациленĕ, вĕсене ертсе пыма тата марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшма кадрсем суйласа илсе çирĕплетнĕ. Çиелтен пăхсан, районта парти вĕренĕвне йĕркелеме мĕн кирлине пурне те тунă, ĕç ăнса пырать, темелле.

Анчах, куллен ертсе пыманнине пула, чылай çĕрте вĕренĕве тивĕçлипе халĕ те йĕркелемен. Акă хăшпĕр тĕслĕхсем.

«Коммунизм» колхозра парти историне вĕренмелли кружокра вĕренекен 14 çынтан малтанхи занятинче 8 çын, иккĕмĕшĕнче 4 çын кăна пулнă. «Большевик» колхозри парторганизаци çумĕнчи кружокра, вĕренекенсем занятие пыман пирки, виçĕ заняти пулман. Пропагандист Н. Селюшкин юлташ каланă тăрăх кунти кружокра вĕренекенсен списки те çук. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа пĕр заняти те ирттермен.

МТС-ри парторганизацинче парти вĕренĕвне иртнĕ вĕренӳ çулĕнче те тивĕçлипе йĕркелемен пулнă, кăçал та ĕç çавнашкалах пырать. Парти историне вĕренмелли кружокăн кашни занятинчех 21 вĕренекентен 7—10 çын пулмасть. Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа пĕр заняти те пулман. Вĕренекенсен активлăхĕ çук, вĕсем конспектсем çырмаççĕ. Пропагандист, вăлах партбюро секретарĕ И. Карабаев юлташ вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас енĕпе вăя хурса тăрăшмасть: вĕренекенсене конспектсем çырма хăнăхтарса пыни, занятисене килте хатĕрленме пулăшни çук.

Парти райкомĕн агитаципе пропаганда пайĕ пуçламăш парторганизацисем çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тăман. Çавăнпа нумай çĕрте кружоксемпе политшкулсенче вĕренес текенсен пĕтĕмĕшле тата политикăлла пĕлĕвне, вĕсем ăçта вĕренме кăмăл тунине шута илмен. МТС-ри кружоках илер-ха. Кунта 21 çын вĕренет, вĕсен пĕлĕвĕсем пĕр пек мар: çиччĕшĕ пуçламăш шкул, çиччĕшĕ çичĕ çул вĕренмелли, ыттисем вăтам шкул пĕтернĕ. Хăшпĕрисем КПСС историне иртнĕ вĕренӳ çулĕнче те, малтан та вĕренмен. Кăçал вара вĕсем парти историне иккĕмĕш çул вĕренекенсемпе пĕрле вĕренеççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсене тата ытти кружоксенче те курма пулать.

Парти райкомĕнче кружоксемпе политшкулсенче ĕç мĕнле пынине вырăнсенчен тăратакан сведенисем тăрăх кăна чухлаççĕ. Пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕн заместителĕ С. Пакушкина юлташран лайăх ĕçлекен кружоксем çинчен ыйтсан, вăл çавсен шутне чылай кружоксене кĕртрĕ, çав шутрах, МТС-ри кружока та асăнчĕ. Райкомра ĕçлекенсем колхозсенчи парторганизацисем çумĕнчи кружоксенче мар, район центрĕнчи тата хăйсем ĕçлекен пĕр çуртри кружоксен занятийĕсенче те пулмаççĕ.

КПСС райкомĕ пропагандистла кадрсене теорилле тата методикăлла пулăшăва çителĕклĕ памасть. Парти вĕренĕвĕн çулĕ пуçланнăранпа пропагандистсен семинарĕ пĕрре те пулман. Вĕсем валли марксистла-ленинла теори ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем ирттермен.

Лайăх ĕçлекен хăшпĕр кружоксемпе политшкулсем çук мар. Райсовет исполкомĕнчи, районти больницăри парти историне вĕренмелли кружоксен занятийĕсем йĕркеллĕ, идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртеççĕ. Пропагандистсем П. Пожедановна Г. Стрелкова юлташсем занятисене лайăх хатĕрленсе пысăк ăсталăхпа ирттереççĕ. Анчах çав паха опыта ытти кружоксене сармаççĕ.

Сĕнтĕрте парти вĕренĕвне лайăхлатма тăрăшманнине, тĕрĕсрех каласан, ку ĕçе хакламаннине çакăнтан та курма пулать: сакăр уйăх хушши ĕнтĕ КПСС райкомĕ хăйĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ пулса ĕçлеме çын тупса лартаймасть. Парти вĕренĕвĕ мĕнле пынипе райком секретарĕсем те сахал интересленеççĕ, уйрăм кружоксемпе политшкулсем мĕншĕн кирлĕ пек ĕçлеменнине пĕлме тăрăшмаççĕ.

Парти вĕренĕвĕн малтанхи кунĕсем çинчен райком бюровĕнче сӳтсе явнă, решени те йышăннă. Анчах çав решение пурнăçлас тĕлĕшпе вырăнсенче нимĕнле организацилле ĕçсем те туса ирттерменнине пула, çитменлĕхсем çав-çавах пĕтмеççĕ-ха.

Н. ЦВЕТКОВ.
(Хамăр корр.).

Комсомольски районĕнче парти вĕренĕвне начар йĕркеленĕ

КПСС Комсомольски райкомĕ кăçал 53 политшкулпа кружок организациленĕ. Вĕсенче коммунистсемпе партире тăман активистсем 761 çын вĕренет.

Нумай кружоксем, вĕренӳ çулне вăхăтра пуçăнса, хăйсен планĕсене ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци çумĕнче икĕ кружок ĕçлет. Иккĕшĕнче те ултшар заняти ирттернĕ ĕнтĕ. Кунти пропагандистсем занятисене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра ирттереççĕ. Вĕренекенсен активлăхĕ те пысăк.

Анчах пур çĕрте те кун пек мар-ха. Жданов ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан, «Гигант» колхозсенчи парторганизацисем хăйсен ĕçĕсене тивĕçлипе туса пыманнине пула кунти кружоксен занятисем плапа иртмеççĕ. Вĕсенче вĕренекенсем нумайăшĕ пулмаççĕ.

Хăшпĕр пропагандистсем занятисене çителĕклĕ хатĕрленмеççĕ. «Красный маяк» колхозри парторганизаци çумĕнче парти историне вĕренмелли кружок руководителĕ М. Карпеев юлташ КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн материалĕсене вĕреннĕ чухне занятире Н. С. Хрущев юлташăн докладне çеç вуласа пачĕ. Хăйĕн каласăвĕнче республикăри, районти, колхозри тĕслĕхсене илсе кăтартмарĕ. Пленум решенийĕ, партипе правительство нумаях пулмасть йышăннă постановленисем çинчен нимĕн те каламарĕ. Унăн икĕ сехете пынă калаçăвĕ хăйĕн тĕллевне çитмерĕ. Вĕренекенсем нумайăшĕ уйрăм положенисене ăнланмасăрах юлчĕç.

Парти историне вĕренмелли МТС-ри кружокра виçĕ заняти пулнă. Анчах вĕренекенсем нумайăшĕ занятисене сиктерсе çӳреççĕ. Сăмахран, октябрĕн 14-мĕшĕнчи занятире 22 вĕренекентен 12-шĕ кăна пулчĕç. Вĕсем те хут-кăранташсăр, материала вуламасăр пынă. Çавна пула, паллах, вĕсен активлăхĕ пулмарĕ. Кружок руководителĕ Н. Счечиков юлташ вĕренекенсене килте вулама литература кăтартнă чухне çитес занятире сӳтсе явмалли ыйтусем çинчен каламарĕ. Хăйĕн калаçăвĕнче паянхи тĕслĕхсене илсе кăтартмарĕ.

Политшкулсемпе кружоксен ĕçĕнче пулакан йăнăшсем КПСС райкомĕ пропагандистсемпе çителĕклĕ ĕçлеменнинчен килет. СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн материалĕсене семинарта 4 сехет хушшинче вĕренмелле пулнă пулсан, пĕр сехетлĕх лекципех ĕçе вĕçленĕ.

КПСС райкомĕ татăклă кăтарту паманнине пула нумай кружоксем, «КПСС 50 çул тултарни» темăна вĕреннĕ хыççăн КПСС историне вĕренесси çине куçнă, СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн тата КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене вĕренессине çитес çула хăварнă.

Парти райкомĕн библиотеки те пропагандистсене çителĕклĕ пулăшмасть. Уйрăм темăсем тăрăх вулама сĕнекен литература списокĕсем, примерлă плансем туса çакман. Лекцисемпе докладсем сайра пулаççĕ. Кружоксемпе политшкулсене нагляднăй пособисем парса тăрас ĕçе йĕркелемен.

Районта 427 коммунистпа партире тăман активист марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Ку вăл парти вĕренĕвне явăçтарнисен 35 проценчĕ пулать. Анчах çак юлташсем нумайăшĕ ĕçе пуçăнман, харпăр хăй тĕллĕн вĕренме плансем туман. КПСС райкомĕ уйăрнă 27 консультант хăйсем çумне çирĕплетсе панă коммунистсене пĕлмеççĕ. Консультантсен канашлăвне пурĕ те 9 çын çеç пухăннă.

Марксизм-ленинизм теорине вĕренмешкĕн районта 14 семинар йĕркеленĕ, вĕсенчен нумайăшĕ ĕçлеме пуçламан. Сăмахран, Нĕркеçри çичĕ çул вĕренмелли шкулти семинарта 15 учитель вĕренчелле, кунта халĕ те ĕçе тытăнман-ха. КПСС райкомĕнчи, МТС-ри семинарсем пирки те çавнах каламалла.

Парти вĕренĕвĕнчи пысăк çитменлĕхсем КПСС райкомĕн бюровĕ çак ĕçе куллен ертсе пыманнинчен килет. Иртнĕ пилĕк уйăх хушшинче бюро марксизм-ленинизм вĕренĕвĕпе çыхăнса тăракан пĕр ыйтăва та сӳтсе явман.

Парти вĕренĕвĕнчи çитменлĕхсене парти райкомĕн вăраха ямасăр пĕтермелле. Унăн работникĕсен политшкулсен, кружоксен занятийĕсенче, лекцисемпе семинарсенче час-часах пулмалла, вĕсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра ирттерме пропагандистсене тăтăшах пулăшса пымалла.

Кружоксене явăçтарнине кăтартакан вăтам цифрăсемпе, занятисем ирттерни çинчен калакан сводкăсемпе лăпланса ларни пулмалла мар. Нуринчен ытла политшкулсемпе кружоксен ĕçĕ, лекцисемпе семинарсен, калаçусемпе докладсен идейăлла-политикăлла шайне ӳстересси çине пăхни кирлĕ.

Идеологилле ĕçе хакламаннине татăклăнах пĕтерессп, марксистла-ленинла вĕренĕве кирлĕ пек йĕркелесси — КПСС Комсомольски райкомĕн тивĕçĕ.

А. МОСКОВСКИЙ.

Кунта парти вĕренĕвне ертсе пымаççĕ

Чеботоргра парти историне вĕренмелли икĕ кружок çеç йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Вĕсенче занятисем идея тĕлĕшĕнчен лайăх иртеççĕ, вĕренекенсен активлăхĕ пысăк.

Ытти политшкулсемпе кружоксенче ĕç çакăн пек пынине курма çук-ха.

Уйрăм пропагандистсем занятисене палăртнă кунсенче ирттермеççĕ, хăйсен ирĕкĕпех урăх куна хăвараççĕ. Сăмахран, Т. Пик юлташ ертсе пыракан политшкулта черетлĕ заняти октябрĕн 23-мĕшĕнче иртмелле пулнă. Вĕренекенсем нумайăшĕ пынă пулин те, заняти çав кун пулман. Çакă вăл вĕренекенсене хытă пăшăрхантарнă. Г. Ужаева ертсе пыракан кружокра та заняти палăртнă кун пулман, пропагандист «манăн киле каймалла» тесе занятие тепĕр куна хăварнă.

Хăшпĕр кружоксенче занятисене çӳременнисен шучĕ пысăк. Пĕрремĕш номерлĕ магазинта 22 çынтан занятие 12—13-шĕ кăна çӳрет. 16-мĕш номерлĕ магазинта вĕренме çӳрекенсен шучĕ 50—60 процентран иртмест. 42-мĕш номерлĕ магазинти, транспорт кантурĕнчи кружоксенче те занятисене çӳременнисем нумай.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕ Л. Семенов юлташ политшкулсемпе кружоксем организацилениpex лăпланнă.

Н. КВАСОВ.

Комсомолецсем ялхуçалăхне малалла вăйлатассишĕн пыракан кĕрешӳре

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ комсомол организацийĕсен ялхуçалăхне малалла аталантарас ĕçри рольне ӳссĕн палăртрĕ. «Комсомол организацийĕсем, — тенĕ Пленум постановленийĕнче, — социализмла ăмăртăва пуçаракансем, ĕçĕн малта тăракан меслечĕсене ялхуçалăх наукипе практики тунă чи çĕнĕ çитĕнӳсене производствăра сарса пыракансем пулса тăмалла, колхозсен, МТС-семпе совхозсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерессипе çыхăнса тăракан ыйтусене парти организацийĕсем умне лартас тĕлĕшпе пуçарулăх ытларах кăтартмалла».

Парти организацийĕсем ертсе пынипе пирĕн республикăри комсомол организацийĕ чылай ӳссе çирĕпленчĕ. Халĕхи вăхăтра республикăри комсомол организацийĕ 74 пин çамрăка пĕрлештерсе тăрать. 1953 çулхи 8 уйăх хушшинче 10 пин çамрăка комсомол ретне илнĕ. Çав хушăрах ВЛКСМ членĕсенчен 500 çын парти ретне кĕме тивĕçлĕ пулнă.

Промышленность предприятийĕсенчен, колхозсенчи тата МТС-сенчи комсомол организацийĕсем халĕхи вăхăтра ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне ӳстерессишĕн, ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвассишĕн мĕнпур çамрăксен ăмăртăвне вăйлатса пыраççĕ. Çак анлă кĕрешӳре комсомолецсем хăйсен пултарулăхне аван палăртаççĕ. Çавăнпа та колхозниксемпе колхозницăсем комсомолецсем çине пысăк шанăç хураççĕ, вĕсене ĕçĕн ответлă участокĕсене шанса параççĕ. Колхозсене, бригадăсене тата фермăсене ертсе пырас ĕçре комсомолецсем чылай. Ялхуçалăх артелĕсен выльăх-чĕрлĕх фермисенче 3 пин комсомолец ĕçлет.

Республикăри комсомол организацийĕ ялхуçалăх ĕçĕсенче кунта пыракан çамрăксен пысăк ушкăнне пăхса çитĕнтерчĕ. Красноармейски районĕнчи «Пятилетка» колхозри свинарка К. Васильева юлташ иртнĕ çулта 12 свинья амăшĕнчен 139 сура илсе пăхса ӳстерчĕ. Хастарлă комсомолка колхозра ĕçлесе çулталăк хушшинче 700 ĕçкунĕ турĕ.

Первомайски МТС-ĕнчи тракторист комсомолец Сахаров юлташ хăйĕн сменщикĕпе пĕрле Маленков ячĕпе тăракан колхозра кăçал 1.750 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Ку ялхуçалăх артелĕнчи комсомолецсем колхоза пысăк тухăçлă тырпул туса илме пулăшнă.

Нумай колхозсенчи комсомол организацийĕсем артель хуçалăхне çирĕплетессишĕн çине тăрса тăрăшаççĕ. Чкаловски районĕнчи «Гвардеец», Муркаш районĕнчи «Красное Сормово», Сталин ячĕпе тăракан, Куславкка районĕнчи «Динамо» тата ытти нумай колхозсенчи пуçламăш комсомол организацийĕсем парторганизацисене ялхуçалăх артелĕсене çирĕплетес ĕçре куллен пулăшса пыракан пысăк вăй пулса тăчĕç.

Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри комсомол организацийĕ 88 çамрăка пĕрлештерсе тăрать. Кунта производствăн кашни участокĕнчех комсомолецсем ĕçленине курма пулать. ВЛКСМ комитечĕ тата унăн секретарĕ Осипов юлташ вĕсене куллен пулăшса пыраççĕ, вĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслеççĕ. Комсомолецсем кирек мĕнле ĕçре те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ, хăйсен примерлă ĕçĕпе союзра тăман çамрăксене ӳсĕмсем тума хавхалантарса пыраççĕ. Комсомол организацийĕ çамрăксене коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем турĕ. Комсомол организацийĕн çамрăксем хушшинчи влиянийĕпе авторитечĕ куллен ӳссе пыраççĕ. Кăçал кунта союзра тăман 20 çамрăка ВЛКСМ ретне илнĕ.

Çав колхоз кăçал хуçалăх ĕçĕсенче пысăк ӳсĕмсем турĕ—государствăна тырă памалли плана малтан тултарчĕ, тырпул вăхăтра пухса кĕртсе тирпейлерĕ. 1954 çулхи çуракине хатĕрленес ĕç те кунта ăнăçлă пырать.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри комсомол организацийĕ 128 çынтан тăрать. Комсомол организацийĕн ĕçне комитет ертсе пырать. Кунти нумай комсомолецсене артель членĕсем ответлă ĕçсем шанса панă. Производство участокĕсене ертсе пыракан комсомолецсен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Ермолаевпа Бакунин комсомолецсем ертсе пыракан бригадăсем чылай ĕçсемпе малта пыраççĕ. Ку бригадăсенчи колхозниксем агротехника правилисене тăтăшах пурнăçласа пыраççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çулсеренех пысăк тухăçлă тырпул туса илет, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерес енĕпе те артель лайăх ĕçлесе пырать. Çак ӳсĕмсене тунă çĕрте, паллах, комсомол организацийĕ те колхоза пысăк пулăшу панă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен каларнă постановление, мĕнпур ĕççыннисем пекех, республикăри комсомолецсемпе çамрăксем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Комсомолецсемпе çамрăксем Пленум решенийĕсенчен тухса тăракан задачăсене пурнăçа кĕртмелле тăвассишĕн хастарлăн кĕрешеççĕ. Нумай çамрăк специалистсем колхозсемпе МТС-сене ĕçлеме каяççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи 53 çамрăк колхозник Етĕрнери ялхуçалăх механизаци шкулне вĕренме кайнă.

Чкаловски районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем ялхуçалăх производствинче яланах хастарлă ĕçлеççĕ. Комсомол организацийĕ нумаях пулмасть хаклă пуçару турĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă решенисем çине ответлесе, комсомолецсем выльăх апачĕсене фермăсем çывăхне турттарса хума тата планпа пăхнинчен 30 тонна ытларах силос хывма обязательство илнĕ те ăна пурнăçланă.

Вăрнар районĕнчи «1-ое Мая» колхозри комсомолецсем те пуçламăш парторганизаципе правление пысăк пулăшу параççĕ. Комсомолецсем обществăлла выльăхсем валли çатанпа тăмран çапса витесем туса пама йышăннă. Комсомол организацийĕн йышăнăвне пуçламăш парторганизаципе правлени ырланă, çакăн хыççăн çамрăксем ятарласа вите тума 35 çынтан бригада йĕркеленĕ. Комсомолец Васильев юлташ ертсе пыракан çамрăксен бригади пĕр уйăх хушшинчех 70 пару хупмалăх вите туса лартнă. Çак ĕçе вĕçленĕ хыççăн çамрăксен бригади фермăри ытти çуртсене юсама тытăннă.

Комсомолецсемпе çамрăксем пархатарлă ĕçлени çинчен калакан тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать.

Республикăри комсомол организацийĕн ĕçĕнче ӳсĕмсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те нумай. Хăшпĕр комсомол организацийĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерес, техникăпа туллин усă курмалла тăвас тĕлĕшпе çамрăксем хушшинче çителĕксĕр ĕçлеççĕ, производствăри хуçасăрлăха хирĕç кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Колхозсемпе МТС-сенчи çамрăксем хушшинче ĕç дисциплинине пăсакан, тухăçсăр тата пахалăхсăр ĕçлекен çамрăксем те сахал мар.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ XIII-мĕш пленумĕ комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи мĕнпур çитменлĕхсене уçса палăртрĕ. ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ палăртнă çитменлĕхсем пирĕн республикăри комсомол организацийĕсен ĕçĕнче те пур. ВЛКСМ обкомĕн V-мĕш пленумĕ ялсенчи комсомол организацийĕсем колхозсемпе совхозсен тата МТС-сен ĕçне çителĕксĕр хутшăннине палăртрĕ. ВЛКСМ Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри райкомĕсем колхозсенчи комсомол организацийĕсене тырпул туса илес тата обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çителĕксĕр хутшăнтараççĕ. ВЛКСМ райкомĕсем çамрăксем хушшинчи социализмла ăмăртăва кирлĕ пек йĕркелемеççĕ, малта пыракан çамрăксен опытне сарса пымаççĕ.

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 1.128 комсомол организацийĕ хăйсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе пачах та ĕçлемен. Çак тĕслĕх нумай комсомол организацийĕсем çамрăксене воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине çирĕплетсе парать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановленирен тухса тăракан задачăсем комсомолăн мĕнпур ĕçне лайăхлатса пыма хушаççĕ.

ВЛКСМ комитечĕсен тата комсомол организацийĕсен комсомолецсемпе çамрăксен пуçарулăхне ӳстерсе пымалла, вĕсен мĕнпур вăйне обществăлла хуçалăха вăйлатса пыма, ялхуçалăх культурисен тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерсе пыма мобилизацилемелле.

Халĕхи вăхăтра комсомол организацийĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсенче комсомолецсен ВЛКСМ организацийĕсен ĕçне тĕплĕн тишкерсе тухмалла, çитменлĕхсемпе йăнăшсене критиклесе, ĕçе лайăхлатмалли майсене палăртмалла. Отчетсемпе суйлав пухăвĕсене ирттернĕ чухне çитес çулта вăйлă тырпул туса илес, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес задачăсене уйрăмах асра тытас пулать.

Ялсенчи комсомол организацийĕсен уй-хире тислĕк турттарас, минераллă удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе, торфпа çĕрĕк тăпри чӳлмекĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа çамрăксен бригадисем тума тăрăшмалла.

Ялсенчи комсомол организацийĕсен çитес кĕске вăхăтра выльăх-чĕрлĕх фермисене ĕçлеме малта пыракан комсомолецсенчен 1.500 çын уйăрса ямалла. Çак ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса тăма çук, ăна тимлĕн пурнăçлама тăрăшас пулать.

Комсомол организацийĕсен çамрăксен социализмла ăмăртăвне тăтăшах вăйлатса пымалла, производствăри ĕç тухăçлăхне ӳстерме тăрăшмалла.

ВЛКСМ райкомĕсен колхозсемпе МТС-сенчи комсомол организацийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн çине тăрса кĕрешмелле. Ку тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен организацисен ĕçне пĕтĕçтерни, лайăх опыта сарса пыни пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Комсомол организацийĕсене вăйлатса пырас ĕçре уйрăмах критикăпа самокритикăна сарса пыни пысăк вырăн йышăнса тăрать. ВЛКСМ комитечĕсен мĕнпур комсомол организацийĕсенче критикăпа самокритикăна анлăн сарса пымалла.

Е. АНДРЕЕВА,
ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ.

Редакцие килнĕ çыру

Пленум решенийĕ хыççăн

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ çĕршыв умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Пирĕн социализмла ялхуçалăхĕн хамăрăн Тăван çĕршыва тырпул, пахча çимĕç, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем çултан-çул ытларах туса памалла.

Çак задачăна кĕске срокра ăнăçлăн татса парасси ялхуçалăх специалисчĕсем тăрăшса ĕçленинчен нумай килет. Колхозсене агротехникăпа зоотехника пулăшăвĕ парас ĕçе татăклăнах лайăхлатас тĕлĕшпе Пленум кашни колхозăн агроном е зоотехник пулма кирлĕ тесе йышăнчĕ. Пирĕн районта иртнĕ çултан пуçласах 41 колхозран 28 колхозра агрономсем пулнă. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хыççăн районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленинчен 13 агроном, 14 зоотехник колхозсенче ĕçлеме кăмăл тунă. Вĕсемсĕр пуçне Шупашкар хулинче тĕрлĕ учрежденисенче хăйсен профессипе ĕçлемен специалистсем 20 çын ытла колхозсенче агрономсем е зоотехниксем пулса ĕçлеме килчĕç. КПСС райкомĕпе район Совечĕн исполкомĕ специалистсене колхоза янă чухне вĕсен вĕренĕвне, ĕçлес пултарулăхне шута илчĕç.

Пушкин ячĕпе, Жданов ячĕпе, Ленин ячĕпе тăракан, «Родина» колхозсем çулсеренех пĕчĕк тухăçлă тырпул туса илнĕ. Вĕсен выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те пĕчĕккĕ пулнă. Ку колхозсене ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленинче ĕçлекен специалистсем: Б. Иванов, А. Михайлов, Е. Баранкина юлташсем агрономсем пулса ĕçлеме кайма килĕшрĕç.

Агрономсемпе зоотехниксем 1953 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлесе çитерессишĕн, çителĕклĕ таран вăрлăх хатĕрлессишĕн, колхозри выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленессишĕн, выльăх апатне тирпейлĕ тыткаласси́шĕн кĕрешеççĕ.

Анчах хăшпĕр ялхуçалăх специалисчĕсем енчен çакăн пек туни курăнмасть-ха. Бая юлса пыракан колхозсене янă специалистсем лайăхрах ĕçлекен колхозсене кусма тĕрлĕ сăлтавсем шыраççĕ. Акă, Фрунзе ячĕпе тăракан колхоза янă зоотехник Н. И. Ильин юлташ Молотов ячĕпе тăракан, «Красный флот» колхозсенче ĕç шыраса çӳрет. Çавăн пекех «Коммунизм» колхоза янă зоотехник В. Бопп, «Память Ленина» колхоза янă агроном В. Мочалов урăх колхозсене куçас шухăшпа пурăнаççĕ. Çавăн пекех Шупашкартан килнĕ хăшпĕр агрономсемпе зоотехниксем хула çывăхĕнчи колхозсене ĕçлеме кайма тăрăшаççĕ. Çавна май хула çывăхĕнчи колхозсене ĕçе вырнаçнă специалистсем хăйсен ĕç вăхăтне ытларах хулара ирттерессшĕн. Акă «Красный флот» колхоза ĕçлеме янă агроном В. П. Тощев колхоза вăхăтлăха машинăпа пырса кайнипех ĕç тăвасшăн.

Хăшпĕр колхоз председателĕсем МТС-ран специалистсем ярса панине тивĕçлипе ăнланмаççĕ. Колхоза МТС-ран янă специалист пынă хыççăнах, хăйсен колхозĕнче малтан ĕçленĕ специалистсене ĕçрен хăтарасси çинчен ыйту лартаççĕ. Акă, Сталин ячĕпе тăракан колхозра Анисимова агронома, Щербаков ячĕпе тăракан колхозра Иванова агронома, Пушкин ячĕпе тăракан колхозра Павлова агронома ĕçрен кăларнă. Ку колхоз председателĕсем пирĕн районăн уйрăмлăхне ăнланман, вĕсем хăйсен колхозĕнче пахча çимĕç енĕпе ăста агрономсем ялан кирлине маннă.

Парти чĕнĕвне ялхуçалăх специалисчĕсем хапăл туса йышăнчĕç. Вĕсем партипе правительство шанса панă ответлă ĕçре КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă пысăк задачăсене хăвăртрах пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурĕç!

П. ЕФРЕМОВ,
Шупашкар районĕнчи ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕн начальникĕ.

Кашни киле—хаçат-журнал

ЙЕПРЕÇ. Огонĕк поселокра хаçат-журнал сарас ыйтупа ятарласа çамрăксен пухăвне ирттерчĕç. Е. Долгова почтальон пуху хыççăнах подписка йышăнма пуçларĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех 38 экземпляр хаçат-журнал сарăлчĕ.

1954 çулшăн хаçат-журнал çырăнасси Костĕр поселокра та ăнăçлă пырать. Икĕ поселока пĕрле илсен 96 кил шутланать. Кунта пурăнакансем 132 экземпляр (4.070 тенкĕлĕх) тĕрлĕ хаçат-журнал çырăннă.

Огонĕк поселокри колхозник-коммунист К. Наумов юлташ «Коммунизм ялавĕ», «Çамрăк коммунист», «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçатсем тата «Ялав» журнал илме çырăннă. А. Зайков, А. Михайлов, Т. Иванов колхозниксем 4—5-шер экземпляр хаçат-журнал çырăннă.

Бригадăсенче усă курма колхоз правленийĕ 15 экземпляр тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнчĕ.

И. ИОНОВ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Чкаловски районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра колхозниксен çурчĕсене радио кĕртес ĕç япăх пынине пĕлтерекен çырăва «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Чкаловски райисполкомне тĕрĕслеме янăччĕ.

Çырăва Чкаловски райсовет исполкомĕн ларăвĕнче сӳтсе явнă. Райсовет исполкомĕ çак колхоза радио кĕртессине 1954 çулти январĕн 1-мĕшĕччен пĕтĕмпех туса пĕтерес тесе решени йышăннă.

Шупашкарти пир-авăр комбинатне мĕншĕн вăраххăн тăваççĕ?

„Правда" хаçатăн корреспондентĕнчен

Шупашкарта, Атăл хĕрринче, пир-авăр тĕртекен пысăк комбинат тăваççĕ.

Пысăк стройка панорами инçетренех курăнать. Растворсемпе бетон хатĕрлекен завода хăйăр, вак чул, цемент тиенĕ йывăр самосвалсем умлăн-хыçлăн пыраççĕ. Строительство площадкинче гусеницăллă тракторсем, бульдозерсем, скреперсем, экскаваторсем куçса çӳреççĕ. Башеннăй крансем хăйсен вăрăм йĕпписене е çӳлелле хăпартаççĕ, е аялалла антараççĕ. Строительсене хамăр çĕршывра туса кăларнă питĕ паха техника панă.

ССР Союзĕн Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствин Главстройĕн Шупашкарти 11-мĕш номерлĕ строительствăпа монтаж тресчĕн коллективĕ кĕске вăхăт хушшинчех пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Çур миллиона яхăн çĕр чавса кăларнă. Вуншар пин кубметр бетон хунă.

Атăл хĕрринче фабрикăсен, пулăшакан цехсен корпусĕсем ӳсе-ӳсе ларчĕç. Пир тĕртекен фабрикăн пĕр пайĕ ĕçлеме пуçланă. Пир-авăр фабрикинче малтанхи хут пиншер метр сатин тĕртсе кăларнă. Пир-авăр тĕртекенсен хули ӳссе пырать. Кунта вăтам шкул, ача яслипе сачĕ пур.

Шупашкарти комбинат пир-авăр тĕртекен хăватлă предприяти пулать. Строительсем нумай ĕçсем туса ирттерчĕç ĕнтĕ. Çапах та ĕç хăвăртлăхĕсем пысăк мар тата вĕсем заданисене палăртнă вăхăтра пурнăçлама май памаççĕ-ха. 11-мĕш номерлĕ строительствăпа монтаж тресчĕ питĕ кирлĕ объектсене ĕçе кĕртес енĕпе юлса пырать.

Трест ĕçĕнче йăнăшсемпе çитменлĕхсем сахал мар. Партипе профсоюз организацийĕсем ăмăртăва çиелтен ертсе пыраççĕ. Чи лайăх пахалăхлă та пы[illegible]тухăçлă ĕçлекен бригадăсен опытне[illegible]ĕтĕçтерсе сараççĕ. Çав вăхăт[illegible]кăра ĕçлекен кашни улттăмĕш[illegible]нормăна тултараймасть. Çакă вăл рабочисен ĕçне питех те çителĕксĕр йĕркеленинчен килнĕ.

— Пирĕн, — тесçĕ строительсем, — час-часах çапла пулса тухать: пĕр-пĕр объектра рабочисем пулаççĕ, строительство материалĕсем пулмаççĕ, тепĕр объектра вара — материалсем пулсан та, рабочисем çук.

Трестăн главнăй инженерĕ Чепурин юлташ, участоксен начальникĕсем Саманов, Мигушин тата Никитин юлташсем механизмсене туллăн ĕçлеттерме тăрăшмаççĕ. Çаксем. вĕсем ĕç тухăçлăхне хытă чакараççĕ. Растворсемпе бетон хатĕрлекен заводра груз тиесе пушатассине алăпа тăваççĕ. Çавна пула завод хăйĕн хăвачĕпе çуррине яхăн кăна усă курса ĕçлет. Çав вăхăтрах стройкăра растворпа бетон çук пирки час-часах чăрмавсем пулаççĕ. Трестăн машинăсемпе механизмсене юсама кирлĕ никĕс çук. Запаслă пайсем çитмеççĕ.

Трест руководителĕсем пулăшакан предприятисем, площадкăра лайăх çулсем т. ыт. тăвасси çине çиелтен пăхнă. Çакă халĕ тĕп сооруженисем тăвассине хытă чăрмантарать.

Комбинатăн энергетика никĕсне тăвасси чи кирлĕ ĕç пулнине ССР Союзĕн Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствин Главстройĕнче пĕлсе тăнă. Министерство приказĕ те ăна тăвассине хăвăртлатма хушнă. Строительство ĕçĕсене вĕçлемелли, оборудовани памалли сроксене палăртса хунă пулнă. Малтанхи черетри ĕçсене кăçал тумалла пулнă. Сроксем иртсе кайрĕç ĕнтĕ, анчах штукатур, монтаж ĕçĕсене туса пĕтермен, çуртсен тăррине витсе çитермен, хăшпĕр оборудовани çитмест. Сăмахран, ăшă виçсе тĕрĕслемелли приборсем, управленищичĕсем, топливо склачĕ валли механизмсем халĕ те илмен.

Ĕçсене хăвăртлатас вырăнне, министерствăра сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче строительствăран 4,6 миллион тенкĕ укçа каялла илсе, ăна урăх объектсене панă.

Трест пайĕсенче тата строительство участокĕсенче экономикăлла кăтартусене тишкермеççĕ. Кунта хуçалăх расчетне ĕçе кĕртесси çине çиелтен пăхаççĕ. Ĕç укçи фончĕсене ытлашши расходлаççĕ, кирпĕчсене çĕмĕрсе сая яраççĕ, цемент, известь тата йывăç виçесĕр расходлаççĕ.

Пурăнмалли çуртсем лартасси, культурăпа йăла строительстви юлса пынине те чăтма çук. Трест руководителĕсем пысăк йăнăш тунă: вĕсем материалсене, рабочисене тата механизмсене 30 объект тăрăх сапаласа янă. Çавăнпа та «Жилстрой» участокĕ пурăнмалли çуртсем тăвас ĕçе ытла та вăраха тăсса пынинчен тĕлĕнме кирлĕ мар.

Хăшпĕр ĕçсем «Гипролегпром» проектировщикĕсен айăпĕпе юлса пыраççĕ. Вĕсем техникăлла документаци хатĕрлесе парас, проектсемпе чертежсем туса парас енĕпе пĕрмай юлса пыраççĕ. Çав сăлтава пула, промышленность корпусĕсемпе пурăнмалли çуртсем лартмалли сроксем вăраха кайса пыраççĕ. Проект тăвакансем ответлăха туйманнине пула, кăçал ача яслисем тата нумай хваттерлĕ тăватă çурт лартас ĕçе тытăнма май килмен.

СССР Министрĕсен Совечĕпе БПСС Центральнăй Комитечĕ «Куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине ӳстересси тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен» йышăннă постановленире 1954—1956 çулсенче пир-авăр тĕртекен хăватлă комбинатсем туса çĕтерсе ĕçе кĕртесси çинчен каланă, çав шута Шупашкарти комбинат та кĕрет. 11-мĕш номерлĕ строительствăпа монтаж тресчĕ умне пысăк та ответлă задачăсем лартнă. Килес çулхине комбинат площадкинчи ĕçсене пĕр хут çурă ӳстерме палăртнă, 1955 çулта вара трестăн строительство пуçланнăранпа пĕтĕмпе тунă чухлĕ çуртсем лартмалла пулать.

ССР Союзĕн Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министерствин трест коллективне тата подряднăй организацисене строительствăн мĕнпур ĕçĕсене палăртнă сроксенче туса çитерме пулăшмалла. Пуринчен малтан стройкăна специалистсен кадрĕсемпе çирĕплетес пулать. Халĕ трест управленийĕнче тăватă инженер-строитель кăна, тĕп вырăн йышăнакан вăтам руководительсем хушшинче ултă специалист кăна шутланать. Машинăсене юсама никĕс туса хумалла, ĕç вăйĕ нумай кирлĕ ĕçсене комплекслă майпа механизацилесе çитермелле, пурăнмалли çуртсем лартассине хăвăртлатмалла тата унăн пахалăхне лайăхлатмалла.

БПСС Шупашкар хула комитечĕпе Чăваш обкомĕ республикăри чи пысăк стройка çине тимлĕрех пăхма тивĕç, унта партилле-политикăлла ĕçе лайăхлатмалла, строительсем хушшинче хисеплĕ задание кăтартуллăн пурнăçлассишĕн социализмла ăмăрту анлăрах сармалла.

И. АРТАМОНОВ.

Шупашкар хули.

(«Правда» хаçат, ноябрĕн 11-мĕшĕнчи номер).

Вырăнти Советсенче

МТС-па колхозсем тунă договорсем мĕнле пурнăçланни çинчен

Сĕрпӳ район Совечĕн нумай пулмасть пулса иртнĕ сессийĕнче МТС-па колхозсем тунă договорсем мĕнле пурнăçланни çинчен сӳтсе явнă.

Сессире депутатсем машина-трактор станцийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критикленĕ. МТС. «Новая жизнь» тата «Авангард» колхозсенче тракторпа çĕрулми лартнă, «Коммунар» колхозра 10 гектар çине выльăх кăшманĕ акса хăварнă, анчах çав çимĕçсене пăхса ӳстерес, ретсем хушшисене кăпкалатас тĕлĕшпе нимĕн те туман. МТС чылай ĕçсене договорта палăртнă сроксенче туса паман, çакă вара тырпул тухăçлăхĕнче палăрмаллах сисĕннĕ. МТС-ра ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Кăçал 10 трактор МТС килкартинче çу каçнă. Вĕсемпе сухаламалли 6.290 гектар çĕре ытти тракторсемпе сухалама тивнĕ.

Колхозсем енчен те договора кирлĕ пек пурнăçламаннисем пулнă. «Большевик», Шверник ячĕпе тата Жданов ячĕпе тăракан колхозсенче тракторсемпе комбайнсем патĕнче ĕçлеме колхозниксене вăхăтра уйăрман.

Районти хăшпĕр колхозсенче авăн çапса пĕтермен. МТС молотилкисем ĕçлемесĕр тăни час-час пулать. Тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсама МТС çителĕксĕр хатĕрленсе тытăннă. МТС ялхуçалăх специалисчĕсене колхозсенче ĕçлеме уйăрнă. Анчах вĕсенчен хăшпĕрисем ĕçе тытăнман.

Депутатсем асăннă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме кирлине палăртрĕç. Сесси МТС-па колхозсем тунă договорсенче каланисене пĕтĕмпех пурнăçласа пыма хушакан решени йышăнчĕ.

В. ИВАНШКОВ.

Пур ачасене те шкула çӳретмелле

Первомайски район Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ халăха вĕрентес ĕçе лайăхлатасси çинчен сӳтсе явнă.

Юлашки çулсенче районта шкулсен шучĕ, вĕренекен ачасен йышĕ ӳссех пырать. Вăрçă хыççăнхи çулсенче Пăлапуç Нурăс, Чăваш Çармăс, Люля, Анат Тăрмăш ялĕсенче çĕнĕрен çичĕ çул вĕренмелли шкулсем уçнă. Халĕ районта 2 вăтам шкул, çичĕ çул вĕренмелли шкулсем — 18, пуçламăш шкулсем 16 шутланаççĕ. Первомайскинчи вăтам шкулта иртнĕ вĕренӳ çулĕнче 272 ача вĕреннĕ пулсан, халĕ унта 500 ача ытла вĕренет.

Турханти вăтам шкулта, Тутар Шурутри, Упамсари çичĕ çул вĕренмелле шкулсенче пур ачасене те вĕренĕве явăçтарнă. Упамсара шкула çӳрекен тăлăх ачасене пулăшас ĕçе лайăх организациленĕ. Нумаях пулмасть «Красная поляна» колхоз 6 тăлăх ачана фуфайкăсем илсе панă, 13 ачана тырă парса пулăшмалла тунă. Шкул валли вутă çителĕклĕ хатĕрленĕ, кăçал 1.700 тенкĕлĕх кĕнекесем туяннă.

Çапах та шкулсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Çичĕ çул вĕрентмелли закон кирлĕ пек пурнăçланса пымасть. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче 66 ача шкул тулашне юлнă. Нăрваш Шăхаль, Пăлапуç Нурăс, Кивĕ Эйпеç ял Совечĕсем пурне те çичĕ çул вĕрентмелли закона пурнăçлас тĕлĕшпе шкулсене сахал пулăшаççĕ. Çакна вĕсем кампанилле ĕç вырăнне хунă, вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче хăшпĕр ĕçсем тунипех лăпланса ларнă. Шкулсемпе учительсен хваттерĕсем валли вутă çителĕклĕ хатĕрлемен. Первомайскинчи вăтам шкулта 700—800 кубометр вутă кирлĕ пулсан, 100 кубометр çеç хатĕрленĕ. Çавăн пекех Пӳç Шăхальти, Пăлапуç Пашъелĕнчи, Шурутри çичĕ çул вĕренмелли тата ытти шкулсенче вутă хĕл сиввисем çитиччен хутмалăх кăна пур.

Район Совечĕн сессийĕ сӳтсе явнă ыйту тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

А. ТУКМАКОВ.

Благоустройство комиссийĕ лайăх ĕçлет

Иртнĕ суйлав вăхăтĕнче суйлавçăсем ял Советне благоустройство енĕпе чылай ĕçсем тума наказсем паначчĕ. Вĕсен наказĕсене пурнăçласа, Çĕнĕ Аччара çĕнĕрен пысăк пĕве пĕвеленĕ.

«Сад эрнинче» Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз сад участокне пысăклатса, çĕнĕрен 8 гектар çине 2.664 тĕп тĕрлĕ йышши паха сортлă улмуççисем, Йăлмаччари пуçламăш шкул пахчине 66 тĕп, Çĕнĕ Аччари шкул пахчине 39 тĕп улмуççи, колхозниксем хăйсен килĕсем çумĕнчи участоксене 410 тĕп улмуççи лартса хăварчĕç.

Çак ĕçсене пурне те ял Совечĕн яланхи благоустройство комиссийĕ пуçарнипе, комисси членĕсем ĕçре ытти колхозниксене пример кăтартнипе туса пынă.

С. ИГНАТЬЕВ,

Канаш районĕнчи Йăлмачча ял Совечĕн председателĕ.

КОЛХОЗ ВЫСТАВКИНЧЕ

Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «СССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление вĕреннĕ май, çак кунсенче колхозниксем хăйсем тунă ĕçсене пăхса тухаççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Коммунизм» ялхуçалăх артелĕн членĕсем утса тухнă çул чаплă та савăнăçлă. Уй-хирсенче, итемсем çинче тĕрлĕ машинăсем кĕрлеççĕ. Хăма çуракан рама, çăм тапакан машина электричество вăйĕпе ĕçлеççĕ. Колхозниксен килĕсенче Ильич ламписем ялкăшаççĕ.

Колхоз торфпа ĕçлекен теплоэлектростанци туса лартнă. Ялта пысăк клуб, магазин, библиотека, çичĕ çул вĕренмелли шкул пур. Анчах ĕç ял сăнсăпачĕ улшăнса, илемленсе пынинче кăна мар. Культурăлла пурнăç ял çыннисене çĕнĕ вăйпа ĕçлеме çĕклет.

Нумаях пулмасть çак колхоза районти пур колхозсенчен те председательсем, парторганизаци секретарĕсем пухăнчĕç. Вĕсем «Коммунизм» колхозăн нумай отраслĕ хуçалăхĕпе паллашрĕç.

Паникасси ял ĕçченĕсем хăнасене ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Хăйсен колхозĕн çитĕнĕвĕсемпе хăнасене тĕплĕн паллаштарас тĕсе, вĕсем клубра выставка организациленĕ.

Выставка колхозра акса ӳстернĕ тĕштырăсене, çĕрулмипе пахча çимĕçсене кăтартса парать. Колхоз пурнăçне кăтартса паракан нумай тĕрлĕ диаграммăсем пур.

Колхоз ĕçченĕсем пĕрлешӳллĕ хуçалăха аталантарассишĕн, тухăçлă тырпул, пахча çимĕç туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ӳстерессишĕн мĕнле кĕрешни çинчен колхоз председателĕ В. Давыдов юлташ выставкăна курнă хыççăн пулса иртнĕ канашлура тĕплĕн каласа пачĕ.

Колхоз хăйĕн хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенчен çулсерен пысăк тупăш илет. Сăмахран, пахча çимĕçсенчен, улма-çырларан илекен тупăш юлашки икĕ çул хушшинче икĕ хута яхăн ӳснĕ. Кăçал 357 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Çак тупăш хуçалăхри нумай ĕçсене пурнăçлама, колхозниксен пурнăçне лайăхлатма, культурине çĕклеме каять. Хуçалăхăн ытти отраслĕсем те пĕрмай малалла аталанса пыраççĕ. Колхоз кăçал кашни гектар çинчен купăста 200 центнер, помидор 165 центнер, кишĕр 390 центнер пухса кĕртнĕ.

Хастарлă ĕç колхоз хуçалăхне аталантарать, колхозниксем валли пуянлăх кӳрет. Акă пĕр тĕслĕх. В. Ратников колхозник халĕ аванс шучĕпе тырă 146 пăт, купăста 3 тонна яхăн, кишĕр 2 тонна яхăн, кăшман 840 килограмм тата ытти продуктсем, унсăр пуçне 1.415 тенкĕ укçа илнĕ. Кун пек тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать. Паллах ĕнтĕ, тырпул нумай, укçа-тенкĕ çителĕклĕ пулсан, кашни колхозник культурăллă пурăнма пултарать. Чăн та çапла. Ялта кашни килте тенĕ пекех радио пур, 212 килте сăмавар, 75 килте велосипед пур, 2 колхозник мотоцикл туяннă. Чылай колхозниксем библиотекăсем тытаççĕ. Шкулсенче е техникумсемпе институтсенче кам та пулин вĕренмен çемье ялта çук темелле. Совет влаçĕ çулĕсенче çак ял Тăван çĕршыва 7 инженер, 13 техник, 35 учитель, 6 агроном, 7 врач, 5 тракторист панă. Халĕ ялти çамрăксем 150 çынна яхăн институтсемпе вăтам шкулсенче вĕренеççĕ.

Утса тухнă çул чаплă, малашлăх тата та илемлĕ. Халĕ колхозниксем Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă постановленисене вĕреннĕ май колхоз пурлăхне ӳстермелли паха майсемпе резервсене усса палăртаççĕ:

— Пахча çимĕçсем лартса тăвас ĕçе механизацилемелле.

— Курăк акмалли пусă çаврăнăшне хăвăртрах тумалла.

— Выльăх-чĕрлĕх ăратне лайăхлатмалла.

— Выльăх апачĕн çирĕп никĕсне тăвас ĕçе халех татса памалла...

Тата ытти нумай паха сĕнӳсем параççĕ ял ĕçченĕсем. Колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци колхозниксен сĕнĕвĕсемпе колхоз хуçалăхне малалла аталантармалли план тунă çĕрте анлăн усă кураççĕ. Çав план тĕпрен илсен хатĕр ĕнтĕ. Çитес çулта кашни гектартан тĕштырăсем 17 центнер, çĕрулми—180 центнер, утă—33 центнер туса илмелле, парник рамисен шутне 1.175 çитермелле, кашни ĕнерен 1.400 литр сĕт суса илмелле, çапла вара 1956 çулта миллион тенкĕ тупăш илмелле.

Çак пысăк ĕçсен планне пурнăçа кĕртесси пирки колхозра никам та иккĕленмест. Мĕншĕн тесен кашни колхозникпа колхозница государство колхозсене пысăк пулăшу панине курса тăрать, хăйсен вăйĕ çине çирĕппĕн шанать. Коммунистсем колхозниксене палăртнă ĕçсене пурнăça кĕртессишĕн хастарлăн кĕрешме витĕмлĕ сăмахпа та, ĕçри примерпа та хавхалантарса пыраççĕ.

М. ТИТОВ.

Халăх судьин отчечĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи пĕрремĕш участокри халăх судьи К. Перцев юлташ хăйĕн ĕçĕ çинчен тăтăшах суйлавçăсене отчетсем тата социализмла законлăх çинчен докладсем туса парать.

Нумаях пулмасть вăл «Молния» колхозри суйлавçăсене отчет туса пачĕ. Суйлавçăсем халăх судьине сĕнӳсем пачĕç, хăйсен наказĕсене тата лайăхрах пурнăçлама хушса хăварчĕç.

П. ГЕРАСИМОВ.

Çĕнĕ магазинсем

Шупашкар хулинче магазинсен шучĕ çуллен-çул нумайланса пырать. Çак кунсенче Ярославски урамра апат-çимĕç сутмалли çĕнĕ магазин уçнă. Октябрь уявĕ тĕлне Ленин урамĕнче ювилернăй япаласем сутма ятарласа çĕнĕ магазин уçрĕç. Унта илемлĕ савăт-сапа, тĕрлĕ йышши хитре япаласем чылай. Магазина уçнăранпа пилĕк кун хушшинче 80 пин тенкĕлĕх ытла тавар сутнă.

* * *

ЕТĔРНЕ. Районти ялсенче магазинсем уçаççĕ. Çак кунсенче Пĕрçырлан ялĕнче çĕнĕ магазин туса пĕтернĕ.

И. ЛЬВОВ.

Вĕренӳ хуçалăхĕ ӳсет

Сĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕн вĕренӳ хуçалăхĕ çулран çулах ялхуçалăхĕнче малта пыракан техникăпа пуянланса пырать. Хальхи вăхăтра çак хуçалăхра 7 трактор, виçĕ комбайн, сеялкăсем, культиваторсем, сенокосилкăсем, жнейка тата ытти машинăсем пур. Кăçал вĕренӳ хуçалăхĕ çĕнĕ автомашина туяннă. Халĕ вăл 3 автомашина тытать.

Вĕренӳ хуçалăхĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те тăрăшса ĕçлет. Унăн лаша, ĕне, сысна фермисем пур. Хуçалăхра ӳстернĕ сыснасем пĕтĕм районĕпе чапа тухнă. Тĕслĕхрен, виçĕ çулхи сысна аçи 455 килограма яхăн тайнă.

Пĕлтĕр кунта студентсен вăйĕпе пĕр гектара яхăн улмуççи сачĕ лартнă.

Вĕренӳ хуçалăхĕ кашни çулах хăйĕн пысăк пахчинчен купăста, кишĕр, сахăр кăшманĕ, хăяр тата помидор нумай пухса илет.

Техникумра вĕренекен студентсем вĕренӳ хуçалăхĕнче час-часах практикăра пулаççĕ. Занятисенче мĕн вĕреннине вĕсем хăйсен куçĕпе курса, хăйсем ĕçлесе çирĕплетеççĕ.

Г. КРАСНОВ.

ГЕНТАРТАН 330 ЦЕНТНЕР ÇĔРУЛМИ

Каганович ячĕпе тăракан колхоз (Калинино районĕ) пысăк тухăçлă çĕрулми пухса кĕртрĕ. Вăтам шутпа гектар пуçне 330 центнер тухнă.

М. ПЕТРОВ.

Чăваш чĕлхинчи араб, перс тата монгол сăмахĕсем

«...Чĕлхери сăмахсен йышĕнчен яланах тенĕ пек хăшпĕр кивелнĕ сăмахсем тухса ӳкеççĕ пулин те, чĕлхене çĕнĕ сăмахсем ытларах кĕреççĕ». И. В. СТАЛИН.

Чăваш чĕлхинче тĕл пулакан мĕнпур сăмахсем икĕ пысăк пайран тăраççĕ: тĕп чăваш сăмахĕсенчен тата урăх чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсенчен. Наука корифейĕ И. В. Сталин хăйĕн «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» ятлă гениллĕ ĕçĕнче чĕлхесем пĕр-пĕринпе хутшăнни çинчен çырать. Сталин юлташ тĕслĕх вырăнне вырăс чĕлхипе илсе кăтартнă. Вăл çапла çырать: «..историллĕ аталанура ытти чылай халăх чĕлхисем унпа (вырăс чĕлхипе) хутшăнса пĕрлешнĕ, вырăс чĕлхи вара яланах çĕнтерсе пынă. Паллах, çакна пула вырăс чĕлхин сăмах йышĕ ытти халăхсен чĕлхи шучĕпе хутшăнса пынă, анчах ку вырăс чĕлхине вăйсăрлатман кăна мар, пачах урăхла, ăна пуянлатнă тата вăйлатнă» (27 стр.). Çак енчен чăваш чĕлхи те ытти чĕлхесенчен уйрăлса тăмасть: вăл хăй ĕмĕрĕнче нумай чĕлхесемпе хутшăннă, унăн сăмах йышĕ çав чĕлхесен шучĕпе ӳссе, пуянланса пынă. Нумай ĕмĕрсем хушши чăваш чĕлхи тюрк, финн чĕлхисемпе хутшăннă, çакăн пек чĕлхесен шутне тата араб, перс, монгол, вырăс чĕлхисене те кĕртме пулать. Çакна май çӳлте асăннă чĕлхесенчен чăваш чĕлхине нумай сăмахсем кĕрсе пынă, çапла вара, чăваш чĕлхин сăмах йышĕ пуянланса пынă. Эпир çак статьяра чăваш чĕлхине араб, перс тата монгол чĕлхисенчен кĕнĕ сăмахсем çинче чарăнса тăрасшăн.

Малтан чăваш чĕлхине араб тата перс чĕлхисенчен кĕнĕ сăмахсене пăхса тухар. Çав сăмахсенчен нумайăшĕ чăваш чĕлхине ĕлĕкех—пулхăр патшалăхĕ вăхăтĕнчех кĕрсе юлнă. Аталанса пыракан суту-илĕве пула, араб тата перс сутуçисем пулхăр хулисенче пысăк суту-илӳ туса пурăннă: вĕсем урлă чăваш чĕлхи араб тата перс сăмахĕсемпе пуянланса пынă. Çав чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсем чăваш чĕлхин шалти законĕсене пăхăнса, кăшт улшăнса, тĕп чăваш сăмахĕсемпе пĕрпеклене пынă. Тĕслĕхрен, араб тата перс чĕлхисенчи сăмахсен пĕрремĕш сыпăкĕсенче тĕл пулакан «а» сасă чăваш чĕлхинче «ы», «у» сасăсене тухать. **Мыскара, хысна, хырăç, хыпар, мул, мухмăр, ухмах** араб сăмахĕсенче тата **пурçăн, пус** (укçа шучĕ), **сурпан, тус, чӳрече, хуçа** перс сăмахĕсенче малтанхи сыпăкра «а» сасă илтĕлет: маскара, казина (вырăссем ку сăмаха «казна» формăпа йышăннă), харадж, мал, ахмак, барижам, сарбанд (сарпуç, банд-çыхмалла). дариче (дар-алăк,-чепĕчĕклетсе калаçнине пĕлтерекен аффикс), хаджа тата ытти те.

Хăшпĕр ученăйсем араб сăмахĕсем чăваш чĕлхине кĕнин авалăхĕ çинчен калакан паллă вырăнне çак сăмахсенче «х» сасă сыхланса юлнине йышăнаççĕ, çак шухăша вĕсем каярах тутар чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче «х» сасă пулманнипе ăнлантарса парасшăн. Анчах эпир ку шухăша тĕрĕс тесе йышăнма пултараймастпăр, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхине кĕнĕ араб сăмахĕсенче, ытти тюркла чĕлхесенчи пекех, «х» сасă яланах сыхланса юлмасть. Тĕслĕхрен, араб чĕлхинчен чăваш чĕлхине кĕнĕ «харам» сăмах тутар чĕлхинче «х» сасăсăр тĕл пулать: «арам». Анчах тутар чĕлхин хăшпĕр диалекчĕсенче çак сăмах «х» сасăпа та тĕл пулать. «Айван» сăмах тутар чĕлхинче «х» сасăпа çӳрет: «хайван».

XIV—XV ĕмĕрсенчен пуçласа, Хусан ханстви пуçланса кайнăранпа, араб тата перс сăмахĕсем чăваш чĕлхине тутар чĕлхи урлă кĕме пуçланă. Ку вăхăтчен тутарсем хăйсем те арабла тата персла сăмахсене пулхăр чĕлхи урлă йышăннă. Хусан ханствине туса хунă хыççăн, Ылтăн Орда влиянине пула тата арабпа перс литературисем пулăшнине пула, тутар çырулăхĕ пуçланса кайнă. Чăваш чĕлхине тутар чĕлхи урлă кĕнĕ араб тата перс сăмахĕсем çакăнпа паллă пулса тăраççĕ: вĕсен пĕррремĕш сыпăкĕнче «а» сасă тăрать. Араб сăмахĕсем: айăп, асап, самана, пайтах, намăс, ахах тата ытти те. Перс сăмахĕсем: ампар, пахча, пасар, патша, тараса, чатăр, ансат, начар, таса тата ытти те. Чăваш чĕлхине кĕнĕ араб тата перс сăмахĕсене хронологилле йĕркепе илсе кăтартасси çăмăл ĕçех мар. Çавăнпа та эпир кунта пирĕн чĕлхере ытларах усă куракан сăмахсене çеç алфавитла йĕркепе илсе кăтартасшăн.

Чăваш чĕлхине кĕнĕ араб сăмахĕсем: **авал** («авваль» сăмахран пулса кайнă, вăл араб чĕлхинче пĕррремĕш, пуçламăш тенине пĕлтерет), **айван, айăп, асап, ахах асамçă, аслă, ăраскал, элем, эрешл, эрех, ĕмĕр, этем, вăхăт, кавăс** (шыв урапи валли тунă ăшă пура; «кавуз» тенĕ сăмахран пулнă, вăл «бассейн» тенине пĕлтерет), **калăп, капăр, кĕпе, лайăх, мухмăр, масар, меслет, мул** (выльăх, пуянлăх), **мыскара, несĕл, пайта** (усă), **перекет, пехилле, пилле, салам, самана, сăвап,** (каçару, çăлăнăç сĕнни, ырă ĕç тунăшăн вилсен парнелени), **сăн-сăпат, сехет, сунтал, тĕрт** (асап, хурлăх), **тĕн, тĕнче, тивлет, тирпей, тирпейлĕ, тупа, тухья, тупăк, тымар, хавас, халăх, хăват, хут, харам, харсăр, хатĕр, хан, ăс-хакăл, хысна, хырăç, хыпар, шик** тата ытти те.

Чăваш чĕлхине кĕнĕ перс сăмахĕсем: **ансат, ăста, эрне, эрĕш, ĕмĕт, кĕсье, кӳпĕрт, кахал, мăрье, намăс, начар, нурăс** (март уйăхĕ), **нарăмăш, патша** (падишах—трон çинчи шах), **пасар, пахча, паштĕр, пурçăн, пус, сăрнай, сарай, сăнчăр, çăпата, сиен, тăшман, тĕрĕс, тараса, типшер, тус, утă, чӳрече, чĕрĕк, чун, хăяр, хур** («Хĕн-хур айĕнче»), **хуçа, ни** (ни çимест, ни ĕçмест) тата ыттисем те.

Араб сăмахĕсем чăваш чĕлхинче çĕре яхăн, перс сăмахĕсем çитмĕле яхăн шутланаççĕ. Анчах çак сăмахсенчен пулса кайнă мĕнпур иккĕмĕшле сăмахсене шута илсен (тĕслĕхрен, араб сăмахĕсем йышлани: **асап, асаплă, асапсăр, асаплан, асаплантар;** перс сăмахĕсем йышлăлани: **ĕмĕт, ĕмĕтлĕ, ĕмĕтсĕр, ĕмĕтсĕрлĕх, ĕмĕтлен, ĕмĕтлентер, ĕмĕтсĕрлен, ĕмĕтсĕрленни** тата ытти те), вĕсен хисепĕ пилĕкçĕре те çитет.

Чăваш чĕлхинчи араб тата перс сăмахĕсем чăваш сăмахĕсен тĕп фондне кĕрсе вырнаçнă, вĕсем пирĕншĕн тăван сăмахсем пулса тăнă. Вĕсем урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсем иккенне тӳрех уйăрса илме те май çук. Кунта сăмахсене чĕлхе науки тĕлĕшĕнчен тĕплĕн тĕпчесе вĕренни çеç пулăшма пултарать.

Анчах хăшпĕр араб тата перс сăмахĕсемпе хальхи вăхăтра сахал усă кураççĕ, вĕсем чăваш сăмахĕсен тĕп фондĕнчен тухса ӳкнĕ. Тĕслĕхрен, араб сăмахĕсем: **асамçă, эрел, кавăс, мăскал, несĕл, пайта, шантал;** перс сăмахĕсем: **аçтахха** (вĕриçĕлен), **нурăс уйăхĕ, сăрнай, апăс** (чӳк пуçлахĕ, ача çуратнă чух пулăшакан хĕрарăм), **янавар** (чунлă тенине пĕлтерет).

Чăваш чĕлхинче араб тата перс чĕлхисенчен кĕнĕ сăмахсемсĕр пуçне монгол (монгол чĕлхисен шутне бурят-монгол, калмăк тата монгол чĕлхисем кĕреççĕ) сăмахĕсем те тĕл пулаççĕ. Вĕсен йышĕ пысăках мар. Анчах та чăваш чĕлхинчи монгол сăмахĕсем çинчен ăнлантарасси—питĕ йывăр ĕç. Вĕсем е тӳрех монгол чĕлхинчен кĕнĕ, е çав сăмахсем монгол чĕлхинче те, чăваш чĕлхинче те, тюрк чĕлхисенче те кашнинчех ĕлĕкавалтанах пуçланса кайнă—çавна каламалла хĕн. Паллах, вĕсем каярах та пулса кайма пултарнă. XIII ĕмĕртен пуçласа Чингис-ханпа унăн еткерĕсем (наследникĕсем) ертсе пынипе монголсем пур тюрк халăхĕсене те тенĕ пекех хăйсене пăхăнтарнă. Çав вăхăтра монголсенчен нумайăшĕ тюрк халăхĕсемпе пĕрлешсе кайнă. Ун чухне, паллах, тюрк чĕлхисене, вăл шутрах чăваш чĕлхине те, монгол сăмахĕсем кĕрсе пынă. Ку вăл историре тюрк халăхĕсемпе монголсем хушшинче нумай вăхăтчен обществăпа политикăлла, культурăпа экономикăлла çыхăнусем пулнинчен килнĕ.

Чăваш тата монгол чĕлхисенчи пĕр пек сăмахсене эпир икĕ пая пайлатпăр. Пĕр пайне монголпа чăваш чĕлхисенче тата тюркла чĕлхесенче пуринче те тĕл пулакан сăмахсене кĕртетпĕр. Анчах та çак сăмахсем авалтанах е монгол чĕлхинче, е тюрк чĕлхисенче тĕл пулни çинчен шантарса калама хĕнтерех. Тепĕр пайне фонетикăлла формипе пĕлтерĕшĕ енчен ытларах тюрк сăмахĕсене мар, чăваш сăмахĕсене çывăх тăракан сăмахсене кĕртетпĕр. Вĕсем тюрк чĕлхисенче е пачах тĕл пулмаççĕ, е урăхла фонетикăлла уйрăмлăхпа тата урăхла пĕлтерĕшпе çӳреççĕ.

Чăваш чĕлхинчи монгол сăмахĕсен пĕрремĕш пайне çак сăмахсене кĕртме пулать:

чăваш чĕлхинче:	монгол чĕлхинче:	тюрк чĕлхинче:
Урпа	арбай	арпа
пăрçа	бурцаг	борчак
пăтă	будаа	бутка
вăрă	ӳре	урук, орлык
пыл	бал	бал
мул	мал	мал
ар	эре	эр, ир
паттăр	багатур	багадыр
хурал	хурал	каравыл
алчăк	ан (тискер кайăк)	ан
пуян	баян	бай
чĕлпĕр	цалгобур	чылбыр
ĕне	ӳнэе	инек, нек
путене	бӳтнэ	бодӳне
чăхă	тахиа	таук
тимĕр	темр, темӳр	темир
тусан	тозун	тос, тозан
йĕке	ийг	иг
сӳк	чӳк	юк т. ыт.

Çакăн йышши пĕр пек сăмахсене çак чĕлхесенче нумай тупма пулать, пурте вĕсем авалах пулса кайнă пулмалла.

Чăваш чĕлхинчи монгол сăмахĕсен тепĕр пайне тюрк чĕлхисенче е пачах тĕл пулман, е чăваш тата монгол чĕлхисенче тĕл пулакан сăмахсенчен урăхла фонетикăлла формăпа тата урăхла пĕлтерĕшпе уйрăлса тăракан сăмахсем кĕреççĕ. Çак сăмахсем монголсемпе чăвашсем хушшинче монголсем кунта пуç пухса тăнинчен те нумай маларах темĕнле культурăлла çыхăну пулни çинчен калаçа параççĕ.

Тĕслĕхрен:

чăваш чĕлхинче:	монгол чĕлхинче:
тырă	тариа (н)
тулă	талх—пĕçернĕ çăкăр
икерчĕ	акарча
турăх	тараг, тарак
нар (нар пек хĕрлĕ)	наран—хĕвел
ача	ач
пилĕк	бэлхӳӳс
йĕкĕр	ихир
сăмса	самс
тиха	даха
пăру	бирагу
хӳтĕ	бурят-монг.—хӳдер
тутăр	татурган
чул	чулу, чолу
тăхлан	туглага
хура тăхлан	тоглага
пĕчĕк, пĕчиккĕ	бичихан
çыр	зиру (рисовать)
кала	келе
сăлтав	сылтаг
какай	гагай-сысна
нӳхха (нӳхха—йытă тытать)	нокай, нохай—йытă т. ыт. те.

Анчах та çак сăмахсем чăваш чĕлхине монгол чĕлхинчен хăш вăхăтра кĕни çинчен татса калама хĕнтерех. Ку ыйтăва пирĕн чĕлхеçĕсен малалла тĕпчемелле.

Çапла вара, эпир кĕскен чăваш чĕлхинчи араб, перс тата монгол сăмахĕсене пăхса тухрăмăр. Юлашкинчен çапла калас пулать: чăваш чĕлхине ют чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсене тĕпчени чăваш чĕлхин историне пĕлме пулăшать, çавăнпа та çав сăмахсем çинчен лайăхрах сутатса парасси пирĕн ученăйсемшĕн чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри пулса тăмалла.

В. Г. ЕГОРОВ,

Чăвашсен государство педагогика институчĕн профессорĕ,

М. Г. ГРИГОРЬЕВА,

çак институтри студентка.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VIII-мĕш сессийĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер ООН Генеральнăй Ассамблейин пĕрлехи ларăвĕнче США делегацийĕ «тискер ĕçсем» çинчен панă провокациллĕ сĕнĕве сессин кун йĕркине кĕртесси çинчен Генеральнăй комитетăн ытларахăшĕ тăратнă сĕнĕве пăхса тухнă. Çав «тискер ĕçсене» Çурçĕр Корейăри тата Китай халăх добровольцĕсен хĕçпăшаллă вăйĕсем «Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен» тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе тунă пулать. Генеральнăй комитетăн асăннă сĕнĕвне Америкăпа Англи блокĕнчи делегацисем сасăланипе йышăннă пулнă. Генеральнăй комитетăн сĕнĕвĕ ку ыйтăва малтан пĕр-пĕр комитетра пăхса тухмасăрах тӳрех Ассамблейăн пĕрлехи ларăвĕнче сӳтсе явма палăртать.

США представителĕ Лодж хăйĕн сăмахĕнче Америка делегацийĕ шухăшласа кăларнă суя сĕнĕве çирĕплетсе калама пĕр факт та илсе кăтартма пултарайман. Вăл, малтанхи пекех, Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикине хирĕç элеклесе каланă кăна.

СССР представителĕ А. Я. Вышинский Америкăн суя сĕнĕвне кун йĕркине кĕртессине татăклăн хирĕç тăнă. Ку сĕнĕве Генеральнăй комитетра пăхса тухнă чухне, тенĕ А. Я. Вышинский, совет делегацийĕ çав пункта, вăл элеклĕ сĕнӳ пулса тăнă пирки, ăна Генеральнăй Ассамблейăн кун йĕркине кĕртессине хирĕç тăнăччĕ. Вăл сĕнӳ фактсене пăсса кăтартни тата намăса пĕлмесĕр суйни çинче никĕсленсе тăрать, уççăнах провокациллĕ тĕллевсем — Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама чарас, вăрçа хатĕрленес ĕçе вăйлатас, тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма чăрмантарас тĕллевсем тытать. Нумай делегацисем, тĕнчери нумай çĕршывсем тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатассишĕн тăрăççĕ.

Çак сĕнӳ Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнче шăпах çак вăхăтра тухса тăни, паллă тунă совет представителĕ, ăнсăртран пулман. Çак ыйту тăрăх США-н ответлă вырăнсенче ĕçлекен деятелĕсем, сăмахран, çар министрĕ Стивенс, генерал Риджуэй, генерал Ван Флит тата ыттисен сăмахĕсене хаçатра çырса, радиопа парса Америка хаçачĕсемпе радио провокациллĕ шав кăларни те çавăн çинчен калать. СССР представителĕ малалла Генеральнăй Ассамблейăна «Нью-Йорк таймс» хаçат корреспонденчĕн ноябрĕн 8-мĕшĕнчи статьи çинчен асăрхаттарса каланă. «Пĕрлешӳллĕ Штатсен чи шанчăклă тусĕсенчен пĕри çак ыйту тĕлĕшпе çакна пĕлтерсе каланă: çар министерстви нумаях пулмасть тискер ĕçсем текенскерĕ çинчен доклад пичетлесе кăларнă, ăна Корейăри конференцие пухма чарас шутпа тунă», тесе çырнă вăл статьяра. Шăпах çак тĕллевпе ĕнтĕ, паллă тунă А. Я. Вышинский, çак ыйтăва хальхи вăхăтра Генеральнăй Ассамблейăра хускатнă. Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас тĕлĕшпе политикăлла конференци пухма чарас тесе, çак ыйтăва кăларса тăратнă.

Çавна май, кăтартса панă СССР представителĕ, Паньмыньчжоньри каласусенче Америка представителĕсем хăйсене мĕнле тыткалани çинчен те асăнмасăр иртме юрамасть. Америка представителĕсен каласăвĕнчен çакă курăнать: вĕсем каласусенче мĕнле те пулин чăрмавсем ытларах пулччăр, конференцие чарса лартас, çапла вара тĕнчери йывăр лару-тăрăва малашне çăмăллатма май парас мар тесе тăрăшаççĕ.

Америкăн реакциллĕ ушкăнĕсем хальхи вăхăтра Корейăри «тискер ĕçсем» çинчен çĕкленĕ ыйту,— çитменнине ку ыйтăва шалт тĕлĕнтерекен çĕнĕ хыпар вырăнне пĕлтереççĕ,— çак ыйтăва Генеральнăй Ассамблейăра пăхса тухма хытă тăрăшни, тенĕ малалла А. Я. Вышинский, Хэнли полковникăн провокациллĕ те элеклĕ ĕçне тепĕр хут çĕнетме хăтлanни пулать. Хэнли 1951 çултах çакăн евĕрлĕ доклад çырса хатĕрленĕ пулнă. Доклапăн тĕллевĕ Çурçĕр Корейăпа Китай халăх добровольцĕсен хĕçпăшаллă вăйĕсене, вĕсем нихçăн та тискер ĕç туман пулин те, тискер ĕçсем тунă тесе айăпласси, «ООН-ăн хĕçпăшаллă вăйĕсем» текенскерĕн салтакĕсемпе офицерĕсене хăйсен тăшманне курайми пулмалла тăвасси, фронтра салтаксен çапăçури шухăш-кăмăлне хăпартасси пулнă. Мĕншĕн тесен салтаксем Корейăри вăрçа малалла тăсасшăн çителĕклĕ тăман.

«Тискер ĕçсем» çинчен тăракан ыйтăвăн искусственнăй тата провокациллĕ шухăшĕ питĕ уççăн курăнать, «Нью-Йорк таймс» хаçат та халĕ Америка делегацийĕн çакăн пек маневрĕ пирки общественăлла ушкăнсем пăшăрхании çинчен çырма пуçланă, тенĕ А. Я. Вышинский. «Нью-Йорк таймс» хаçат ноябрĕн 6-мĕшĕнче çакна палăртнă: çак ĕçре ытла та васкани палăрнă, çавна пула США хăй айăпласа калаиине мĕнпе çирĕплетсе парасси çинчен е мĕн пирки конкретлă айăплани çинчан паянхи кунччен те Ассамблейăна пĕлтермен. Эпир паян та çакнах куртăмăр, мĕншĕн тесен Лодж ку ыйту тĕлĕшпе нимĕн те ăнлантарса калаймарĕ. Вăл хăй маларах çырнă ăнлантарулла çырăвĕнчи шухăшсене кăна тепĕр хут каларĕ, анчах вăл çыру та нимĕн çинчен те ăнлантарса памасть.

Хăйĕн сăмахĕнче А. Я. Вышинский çакна кăтартса панă: Америка делегацийĕ Лодж США «тискер ĕçсем çинчен тăракан» ыйтăва кун йĕркине кĕртессишĕн сĕмсĕрленсе тăрăшнине хӳтĕлес тесе каланă шухăшсем ку ыйтăва Генеральнăй Ассамблейăра лартма кирлине нимĕн чухлĕ те çирĕплетсе параймаççĕ. А. Я. Вышинский çакна кăтартса панă: США-н хĕçпăшаллă вăйĕсем тата «ООН-ăн хĕçпăшаллă вăйĕсем» текенскерсем шăпах ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери правăсене пăсакансем пулса тăраççĕ. Совет представителĕ Ассамблейăна çакăн çинчен аса илтернĕ: Демократиллĕ Корея Халăх Республики 1950 çулта, Хăрушсăрлăх Совечĕ Америкăн çар авиацийĕ пĕтĕм тĕнчери правăсене сĕмсĕррĕн, преступникла пăснине пăхса тухтăр тесе, икĕ хутчен ыйтнă. Америкăн çар авиацийĕ хуласемпе ялсене аркатнă, Корейăри мирлĕ халăха вĕлернĕ, хĕрарăмсемпе арçынсене, ачасемпе ватă çынсене тата Çурçĕр Корейăра тыткăнра пурăнакан американецсене вĕлернĕ.

Халĕ, тенĕ А. Я. Вышинский, Ассамблейăри ĕç йĕркин правилисене пурнăçласа пымаллине пула, «ООН-ăн хĕçпăшаллă вăйĕсем» текенскерсем Корейăпа Китайăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе тата Çурçĕр Корейăри мирлĕ халăха хирĕç тунă нумай тĕлĕнмелле тискер ĕçсем çинчен эпĕ калама пултараймастăп. Анчах ку фактсем халĕ сӳтсе явакан ыйтупа тӳрех çыхăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен американецсем Çурçĕр Корея çине бомбăсем пăрахнине пула Корейăри мирлĕ халăх, Çурçĕр Корейăн мирлĕ воинĕсемпе Китай добровольцĕсем кăна мар, çавăн пекех «ООН-ăн хĕçпăшаллă вăйĕсен» тыткăнри çар çыннисем, тĕпрен илсен, Америкăпа Кăнтăр Корейăн тыткăнри çар çыннисем те пишерĕн пĕтнĕ пирки иккĕленмелли çук. Паллă ĕнтĕ, тĕрĕслĕхе пăсса кăтартакансемпе провокаторсем çав тыткăнри çар çыннисен вилĕмĕшĕн айăпа Çурçĕр Корейăпа Китай халăх добровольцĕсен хĕçпăшаллă вăйĕсем çине йăвантараççĕ.

Сӳлерех каласа пани çак ыйтăва Генеральнăй Ассамблейăн пĕрлехи ларăвĕнче пăхса тухма кирлĕ маррине çирĕплетсе парать. Çавна асра тытса, Совет Союзĕн делегацийĕ ку ыйтăва кун йĕркине кĕртессине хирĕç татăклăн тăрать, США делегацийĕ панă сĕнĕве сирсе ярасшăн çине тăрать.

А. Я. Вышинский тухса каланă вăхăтра США представителĕ Лодж чи сĕмсĕр майпа икĕ хутчен СССР представителĕн сăмахне чарса лартма хăтланнă. Лодж хăй ларакан вырăнтан икĕ хутчен кăшкăрнă. Генеральнăй Ассамблейăн председателĕ СССР представительне калама чартăр, малалла калама ирĕк ан патăр, тесе требовани лартнă Лодж. США представителĕ çирĕплетсе каланă тăрăх, А. Я. Вышинский сӳтсе явакан ыйту тĕлĕшпе процедура правилисене пăсма пуçланă имĕш. США представителĕ нерв пăсăлнă çын пек кăшкăрни çине ответлесе, Ассамблея председателĕ Пандит госпожа А. Я. Вышинские икĕ хутчен «сӳтсе явакан ыйту тăрăх шала кĕрсе каймалла мар» тесе ыйтнă. Анчах çакă вăл А. Я. Вышинские хăйĕн сăмахне каласа пĕтерме чăрмантарма пултарайман. Лодж, хăй каланă тăрăх, «хăшпĕр япаласем çинчен ăнлантарса пама», трибуна çине хăпарнă. Анчах Ассамблея председателĕ ăна тухса калама ирĕк паман. Вăл çакна кăтартса панă: США представителĕ хăй тăратнă сĕнĕве сӳтсе явнă чухне ăнлантарса пама пултарать.

Ун хыççăн Англи представителĕ Ллойд тухса каланă. Вăл США-н провокациллĕ сĕнĕвне Ассамблейăн кун йĕркине кĕртме сĕнӳ панă.

Польша представителĕ Кац-Сухи çакна палăртнă: Америка делегацийĕ, провокациллĕ шухăш тытса, Америка оккупанчĕсем Демократиллĕ Корея Халăх Республикинче тунă тискер ĕçе тĕнчери общественноçран пытарма, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас ĕçе чарса лартма, Корейăра политикăлла конференци пухассине чарма, пĕтĕм тĕнчери çыхăнусенчи лару-тăрури йывăрлăха ӳстерме тĕллев лартать.

Ун хыççăн Ассамблейăн ытларахăшĕ Генеральнăй комитет Ассамблейăн кун йĕркине США делегацийĕн сĕнĕвне кĕртесси çинчен панă сĕнӳшĕн сасăланă. СССР, УССР, БССР, Польша тата Чехословаки делегацийĕсем вăл сĕнĕвне хирĕç сасăланă. Индипе Гватемала представителĕсем нихăш майлă та сасăламан.

Сасăланă сăлтавсем пирки тухса каласа, Инди представителĕ Менон çапла пĕлтернĕ: Инди делегацийĕ США делегацийĕ сĕннĕ ыйту тăрăх тăратма пултаракан резолюцисен проекчĕсене сӳтсе явас çĕре те, сасăланă çĕре те хутшăнмĕ. Вăл делегатсен çак факта астума кирли çинчен каланă: сӳтсе явас ĕç Генеральнăй Ассамблейăра тепĕр енĕ çук чухне пулса иртет. Тепĕр енĕ çак ыйтупа тӳрех интересленет.

Индонези, Сири тата Югослави представителĕсем çакна кăтартса панă: вĕсем асăннă ыйтăва Ассамблейăн кун йĕркине кĕртессине хирĕç тăман. Вĕсен шухăшĕ тăрăх, ку ыйтăва сĕннĕ пулсан, ăна кун йĕркине кĕртес мулать. Вĕсем кунпа пĕрлех çакна палăртнă: США делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвне тăратма юрăхсăр вăхăт суйласа илнĕ, вĕсем çакăн пек ыйтăва сӳтсе явассине вырăнлă мар тесе шутлаççĕ, мĕншĕн тесен ун хыççăн тĕнчери лару-тăрури йывăрлăх малалла вăйлanса кайма пултарать.

Ун хыççăн Ассамблея специальнăй политика комитечĕн докладне çирĕплетнĕ. Вăл докладра «Кăнтăр Африка Союзĕнчи Инди çыннисен пурнăçĕ» çинчен тăракан ыйту тĕлĕшпе сĕннĕ резолюци проекчĕ пулнă. Çак проектшăн 42 делегаци, вăл шутра СССР, УССР, БССР, Польша, Чехословаки, араб тата Ази çĕршывĕсен делегацийĕсем сасăланă. 17 делегаци нихăш майлă та сасăламан. Кăнтăр Африка Союзĕн делегацийĕ кăна çак резолюци проектне хирĕç сасăланă.

Ун хыççăн Ассамблея Политика комитечĕн Тунис ыйтăвĕ тăрăх тунă докладне тепĕр хут сӳтсе явма пуçланă. Докладра комитетăн резолюци проекчĕ пулнă. Çав проектăн резолюциллĕ пайне Исланди представителĕ тӳрлетӳ кĕртнĕ пулнă. Политика комитечĕн çав резолюци проектне йышăнман, мĕншĕн тесен уншăн мĕнпур сасăсен виççĕ пайĕнчен икĕ пайĕ чухлĕ сасă пухăнайман. 31 çĕршывăн делегацийĕсем (СССР, БССР, УССР, Польша, Чехословаки, араб тата Азири çĕршывсем чылайăшĕ, Швеци, Гватемала, Исланди, Дани, Норвеги, Мексика тата ыттисем те) резолюцин çак проекчĕшĕн сасăланă. 18 çĕршывăн представителĕсем, вăл шутра США, Англи, Турци, Израиль тата ыттисем те, хирĕç сасăланă. Вуншар çĕршывăн делегацийĕсем нихăш майлă та сасăламан.

Çапла майпа, Пĕрлешӳллĕ Штатсем ертсе пыракан колониллĕ державăсем Тунис ыйтăвĕ тĕлĕшпе çавăн пек çителĕклĕ мар резолюцие те йышăнтарман. Вĕсем хăйсем колониллĕ тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи напи тĕлĕшĕнчен ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешĕвĕн усал тăшманĕсем пулнине кăтартса панă.

Америка шпионĕсем Демократиллĕ Германи Республикинче сăтăрла ĕçсем тăваççĕ

БЕРЛИН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕ сумĕнчи пичет ведомствинче пресс-конференци пулса иртнĕ. Унта нимĕççен тата ют çĕршыври пичет представителĕсем умĕнче Хĕвеланăç Германири шпионла центрсенчен пĕрин — «филиал Х/9592» текенскерĕн руководителĕн заместителĕ пулнă Ганс-Иоахим Гейер тухса каланă.

1953 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕччен Гейер çак шпионла организацире «Грэлл» ятпа ĕçленĕ. Халĕ вăл çак преступникла организацире ĕçлеме пăрахма шут тытнă, çавăнпа Гейер Демократиллĕ Германи Республикин правительствинчен хăйне Демократиллĕ Германи Республикинче хӳтĕлĕх пама ыйтнă. Хăйĕн шухăш-кăмăлĕ тĕрĕс пулнине кăтартса парас тесе, вăл Демократиллĕ Германи Республикинчи тивĕçлĕ влаçсене çулте асăннă «филиал Х/9592» ятлă шпионла организацийĕн вăрттăн документсене панă. Çав шпионла центр гитлерла çарăн генералĕ пулнă, гитлерла разведчик Геленăн шпионла организацине пăхăнса тăнă.

Пресс-конференцире тухса каласа, Гейер çакна палăртнă: Геленăн шпионла организацин ĕçне Америка разведки ертсе пынине тата укçа-тенкĕ парса тăнине, çав организаци нимĕç халăхĕн наци интересĕсене хирĕç пынине ăнланса илнĕ хыççăн вăл Демократиллĕ Германи Республики енне куçма шут тытнă.

Гейер пресс-конференцире Геленăн шпионла организацийĕ çинчен конкретлă сведенисем пĕлтернĕ. Вăл организаци Хĕвеланăç Берлинра вырнаçнă, Америка разведки кăтартса панă тăрăх ĕçлет.

Гейер, уйрăммăн илсен, çакна кăтартса панă: çак преступникла организацире ертсе пыракан вырăнсенче гитлерла çарăн офицерĕсем пулнă çынсем ĕçлеççĕ. Унăн агенчĕсем пулма, тĕпрен илсен, СА, СД, СС йышши тĕрлĕрен фашистла организацисемпе гестапо членĕсем пулнă çынсене, çавăн пекех гитлерла çарăн офицерĕсем пулнă çынсене пухаççĕ. Геленăн шпионла организацийĕн мĕнпур филиалĕсем суту-илӳ фирмисен ячĕпе витĕннĕ. Ку организаци тĕллевĕ экономика, политика тата çар енĕпе шпионаж туса пырасси, Демократиллĕ Германи Республики территорийĕнче тата Берлинăн демократиллĕ секторĕнче саботажпа сăтăрла ĕçсем тăвасси пулать.

«Тифе унд форшунг» текен ятпа витĕнсе халăх демократи çĕршывĕсемпе Совет Союзне шпионсем ямалли план тунă, тенĕ Гейер. Вăл çавăн пекех çакăн çинчен пĕлтернĕ: Геленăн шпионла организацийĕн агенчĕсен аллинче Америкăра туса кăларнă радиопередача аппаратури пур. Геленăн Хĕвеланăç Берлинри шпионла организацийĕ Америка разведкипе çыхăну тытнине Гейер çакăн пек сведенисемпе çирĕплетсе панă: ку организацин мĕнпур ĕçĕ Америкăн вăрттăн службине пăхăнса тăрать тата унтан укçа-тенкĕ илсе тăрать.

Пресс-конференци пĕтнĕ хыççăн, нимĕççен тата ют çĕршывсенчи пичет представителĕсене радиопередачиксем, сехет механизмĕ тăрăх сирпĕтекен япаласем тата Америкăра туса кăларнă шпионла тата сăтăрла ĕçсем тумалли ытти хатĕрсем кăтартнă. Вăл хатĕрсем Демократиллĕ Германи Республикинчи хăрушсăрлăх органĕсен аллине вĕсем Америка разведкин Хĕвеланăç Берлинри филиалĕсенчи шпионсемпе диверсантсене тытнă чухне лекнĕ. Пресс-конференцире пулнă çынсене çавăн пекех «филиал Х/9592» ятлă шпионла организацийĕн вăрттăн документсене кăтартнă. Вăл документсене Гейер Демократиллĕ Германи Республикинчи влаçсен тивĕçлĕ органĕсене панă пулнă.

Японири ĕççыннисем хăйсен прависемшĕн çине тăрса кĕрешеççĕ. Рабочи класс çĕршыва çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнине хирĕç, халăха хирĕçле ĕçлесе пыракан правительствăна хирĕç, Америка çарĕсем Японие оккупацилеиине хирĕç кĕрешет. Нумай пулмасть Японири рабочисем Америкăн çар базисенче ĕç условийĕсем япăх пулнине хирĕç забастовка тунă. 150 пин çын 48 сехет хушши ĕçе хутшăнман.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Америкăн Токио сывăхĕнчи сывлăш-çар бази патĕнче рабочисем демонстраци тăваççĕ.

СИНЬХУА агентствин фотоӳкерчĕкĕ.

Бонра тата Парижра йышăннă çар договорĕсене çирĕплетессине хирĕç

ПАРИЖ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Германие тепĕр хут хĕçпăшаллантарнине, Бонра тата Парижра тунă çар договорĕсене çирĕплетессине хирĕç пыракан юхăма Францири тĕрлĕ политикăлла партисен, профсоюзсемпе общественăлла организацисен представителĕсем хутшăнаççĕ. Бонра тата Парижра тунă договорсене çирĕплетессине хирĕç кĕрешме Парижри 8-мĕш, 16-мĕш тата 17-мĕш округсенче комитетсем тунă. Çав комитетсем чĕннипе ĕнер пысăк митинг пулса иртнĕ. Унта тухса калакан мĕнпур ораторсем çакна паллă тунă: «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» çинчен тунă договора çирĕплетни Францин наци интересĕсене хирĕç пырать. «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» çинчен тунă договора çирĕплетес пулсан,—тенĕ Наци пухăвĕн депутачĕ Баллон,—пирĕ пĕр-пĕр кун, ку вăл Аденауэршăн кирлĕ пулсан, Штеттинпа Данцига илессишĕн вăрçа хутшăнтарма пултараççĕ».

Мĕнпур ораторсем тенĕ пекех çакна палăртнă: Франципе Совет Союзĕ хушшинче пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договор пур. Франци интересĕсемшĕн çак договора тепĕр хут пурнăçа кĕртни кирлĕ, тесе паллă тунă ораторсем.

Митингра Министрсен Совечĕн председателĕсем пулнă Даладье тата Поль Бонкур, çавăн пекех Наци пухăвĕн депутачĕ Жак Барду тата республика Совечĕн членĕ Мишель Дебре янă саламлă çырусене вуласа панă.

«Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Парижри 9-мĕш округри Мир комитечĕн делегацийĕ почтăпа телеграф тата телефон министрĕ Ферри патне пырса кайнă. Министр секретарĕ делегацие çапла пĕлтернĕ: Ферри парламентра Бонра тата Парижра тунă договорсене çирĕплетессине хирĕç сасăлĕ, тенĕ. Наци пухăвĕн депутачĕсем — социалист Лапи тата деголлевец Биньон та хăйсем çавăн пек хирĕç сасăласси çинчен каланă.

Мосаддыка суд туни

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Çар сучĕн ноябрĕн 10-мĕшĕнчи ларăвĕнче тухса каланă чухне Мосаддык хăйне хӳтĕлекен влаçсем уйăрса панă адвокат Бозоргмехр полковник пулăшăвне йышăнма килĕшмен. «Эпĕ хама хамах хӳтĕлетĕп. Вăл сутăнчăк»,—тенĕ Мосаддык. Çавах та Бозоргмехр тухса каланă. Вăл çапла каланă: çар трибуналĕн Мосаддыка суд тума право çук. Мосаддык закон тăрăх халĕ те премьер-министр пулса тăрать, мĕншĕн тесен меджлис халĕ те пур. Мосаддыка хирĕç кăларса тăратнă айăпсем политикăлла айăпсем пулса тăраççĕ: Иран конституцийĕ тăрăх, министрсене меджлис хушнă тăрăх Аслă суд кăна суд тума пултарать. Унсăр пуçне, Мосаддыка политикăлла преступленисемшĕн айăплаççĕ пулсан, унăн ĕçне çар судĕнче мар, гражданла судра пăхса тухмалла.

Мосаддык хăйĕн хӳтĕленмелли сăмахне çырнă хутăн копине пичет представителĕсене пама хăтлансан, ларусем ирттермелли залра тытăçу пуçланнă. Унтан Мосаддык хăй çырнине вуласа панă.

Мосаддык çапла пĕлтернĕ: Иран юлашки çур ĕмĕр хушшинче асапсем тӳсни Англин чее те усал ĕçĕсем пирки пулнă.

Çар трибуналĕн паянхи ларăвĕнче Мосаддык каллех çапла пĕлтернĕ: судăн ăна айăпласа çырнине пăхса тухма право çук. Мĕншĕн тесен вăл премьер-министр пулнă чухне, ăна чрезвычайнăй полномочисем пама йышăннă закон тăрăх, мĕнпур çар трибуналĕсемпе ятарласа тунă судсене салатса янă. Чрезвычайнăй полномочисем çинчен йышăннă закона меджлис çирĕплетнĕ пулнă. Мана нумай преступленисемшĕн айăплаççĕ, анчах эпĕ çапла шутлатăп: эпĕ мĕн пурĕ те пĕр «преступлени» кăна тунă—ют çĕршыв çыннисен ирĕкне пăхăнма килĕшмен. Малалла Мосаддык çапла каланă: текех вăл суд ларăвне килмĕ, ăна вăйпа илсе килеççĕ пулсан, пĕр сăмах та чĕнмĕ.

ПАРИЖ, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Тегеранран пĕлтернĕ тăрăх, çар сучĕн паянхи ларăвĕнче прокурор Иран премьер-министрĕ пулнă Мосаддыка вĕлермелле туса приговор йышăнма требовани лартнă.

Тегеранри лару-тăру

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Тегеранран пĕлтернĕ тăрăх, Мосаддыка суд тăвассин юлашки тапхăрĕ пуçланнă тĕле Мосаддык майлă тăракансем пĕтĕмĕшле забастовка пуçласа ярас хăрушлăх пурринe шута илсе, паян Тегеранра полицейскисен патрулĕсемпе çар хуралне чылай вăйлатнă.

Тегеранăн çар губернаторĕ Датсетан генерал хулари «йĕркелĕхе пăсас пулсан» хаяр мерăсем йышăнассипе хăратнă. Тегеранра пурăнакансем валли приказ кăларнă. Вăл приказ тăрăх, хулари мĕнпур çынсен хăйсен сумĕнче кам пулнине пĕлтерекен документ пулмалла, вăл документа полицие çар хуралĕ ыйтсан кăтартмалла.

Тегеранри тĕп площадьре полици демонстрантсене — Мосаддык майлă тăракансене хăваласа салатма хăтланнă. Мосаддык майлă тăнине палăртса, столицăра çĕршер магазинсене хупнă. Полицие салтаксен вăйлатнă нарядĕсем тĕп площадьсемпе урамсем хĕреслĕ касса кайнă вырăнсене хуралласçĕ. Кăнтăрла тĕлне 20 демонстрант таран арестленĕ. Темиçе çынна полицейскисен чукмарĕсемпе тискеррĕн хĕнесе пĕтернĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Тегеранран çапла пĕлтерет:

Иран çарĕн официальнăй представителĕ ноябрĕн 12-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, çарсем Мосаддык майлă тăракан демонстрантсем çине пеме тытăннă. Икĕ çынна вĕлернĕ.

НЕФТЬ ЫЙТĂВĔ ЕНĔПЕ ĔÇЛЕКЕН АСЛĂ СОВЕТĂН ЧЛЕНĔ МАКИ КАЛАНИ

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Доньяе эмруз» хаçат пĕлтернинчен çакă паллă: нефть ыйтăвĕ енĕпе ĕçлекен аслă советăн членĕ Маки пичет представителĕсемпе калаçнă. Вăл пичет представителĕсене шах патне янă хăйĕн вăрттăн çырăвне вуласа панă. Çырура нефть ыйтăвĕпе Мосаддыка суд тунă пирки каланă вырăн пур.

Маки çапла шутлать: çар трибуналĕн Мосаддыка суд тума право çук. Мосаддыка меджлис ирĕк панă хыççăн кăна суд тума пултараççĕ. Маки çавăн пекех çапла пĕлтернĕ: вăл малтанхи пекех Иранăн хальхи правительствипе килĕшмест.

Художествăлла пултарулăх коллективĕсем валли çĕнĕ кĕнеке

Республикăри Халăх творчестви çуртĕ Г. Лисков çырнă «Ялти хор кружокĕсемпе музыка кружокĕсен ĕçĕн методики» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Кĕнекере автор хорпа музыка кружокĕсен хальхи задачисем, вĕсене организацилесси, кружокăн производствăлла тата творчествăлла ĕçĕсем, çĕнĕ юрăсем вĕрентесси çинчен тĕплĕ çырса панă. Çавăн пекех дирижорăн (хор руководителĕн) ĕçĕ çинчен тата репертуара суйласа илесси çинчен çырнă.

Кĕнеке колхозсенчи, шкулсенчи, клубсенчи кашни хорпа музыка кружокĕн руководителĕсене куллен кирлĕ пособи пулса тăрать.

Асăннă кĕнекене книготорг магазинĕсенче туянма е Республикăри халăх творчестви суртĕнчен çырăнса илме пулать.

Кĕнекере 60 страница, тиражĕ 3 пин экземпляр, хакĕ 1 т. 50 пус.

Н. АМУРЦЕВ.

Колхоз театрĕн гастролĕсем

Республикăри куçса çӳрекен колхоз театрĕн артисчĕсен пĕр ушкăнĕ сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче Тутар АССР-ĕпе Куйбышев облаçĕнчи чăваш ялĕсенче пулчĕ. Унта Агаковпа Родионов çырнă «Ылтăн вăчăра» ятлă тата Мари драматургĕ Волков çырнă «Ксения» ятлă пьесăсене 52 хутчен выляса панă.

Артистсен тепĕр ушкăнĕ Болгари драматургĕ О. Василев çырнă «Сĕр çинчи рай» пьесăпа Тутар республикипе Ульяновск облаçĕнчи чăваш ялĕсенче 48 хутчен выляса панă. Спектакльсене 30 пин çын ытла курнă.

Колхоз театрĕн виççĕмĕш ушкăнĕ юлашки виçĕ уйăх хушшинче хамăр республикăри колхозсенче Г. Харлампьев çырнă «Чи илемли» ятлă музыкăллă комедие 75 хутчен кăтартнă.

Халĕ театр коллективĕ А. Афиногеновăн «Машенька» пьесине, Н. Айзманпа К. Пайраш çырнă «Чавса çывăх та çыртма çук» ятлă çĕнĕ комедие лартма хатĕрленет.

В. МИХАЙЛОВ.

Экскурсире пулчĕç

КОМСОМОЛЬСКИ. «Гигант» колхозра зооветеринари кружокĕн занятийĕсем вăхăтра, йĕркеллĕ иртеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем кружок занятийĕсене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ.

Малта пыракансен опычĕпе паллашас тесе, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем республикăра малта пыракан колхозсене экскурсисене каймалла турĕç.

Çак кунсенче икĕ ферма заведующийĕ, 5 доярка, 2 скотница, сысна пăхакан 6 çын Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозра тата Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра пулчĕç, вĕсен ĕç опычĕпе паллашрĕç.

С. СИДОРОВ.

Тупăшлă сад

СОВЕТСКИ. Жданов ячĕпе тăракан колхозăн çамрăк сачĕ колхоза пысăк тупăш пама пуçларĕ.

Кăçал садра улмасемпе çырласем тухăçлă пулчĕç. Колхоз вунă пин тенкĕлĕх ытла панулми сутрĕ. Унсăр пуçне хăмла çырли, чие çырли, хурлăхан, крыжовник нумай сутнă. Садран кăçал 50 пин тенке яхăн тупăш илнĕ.

Я. СИГАЕВ.

ПĔЛТЕРНИ

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека суртĕнче КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Ялхуçалăх культурисене тăваткал тĕмĕн лартасси тата çак ĕçĕн пĕлтерĕшĕ».

Лектор—Л. А. Пельцих профессор.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 14-мĕшĕпе 15-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Беспокойная должность».

Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 14-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Мой маленький друг».

Сеанссем пуçланаççĕ: 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м. тата 20 с. 15 м.

Хаçат-журнал çырăнса илĕр!

Шупашкарта пичетленсе тухакан çак хаçатсемпе журналсене 1954 çулта илсе тăма пур граждансем те çырăнса илме пултараççĕ:

„Коммунизм ялавĕ“, „Советская Чувашия“, „Молодой коммунист“, „Çамрăк коммунист“, „Агитатор блокночĕ“ (вырăсла тата чăвашла), „Ялав“ журнал, „Тăван Атăл“ альманах.

Уйрăм çынсем «Союзпечат» уйрăмĕсенче тата почтăсенче çырăнса илме пултараççĕ. Çавăн пекех письмоносецсем граждансен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем фабрикăсемпе заводсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышăнаççĕ.

Предприятисен, организацисен, шкулсен, культпросвет учрежденисен, колхозсемпе МТС-сен службăра усă курма тата пĕрле вуламалли вырăнсенче усă курма хаçатсемпе журналсем «Союзпечетĕн» районсемпе хуласенчи уйрăмĕсенче çырăнса илмелле.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 08382 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2600. Тираж 20.000 экз.